27-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944 ИЮЛЬ 23 ВЫРСАРНИКУН 144(6639) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Генерал-полковника МАСЛЕННИКОВА

БАЛТИКА тăрăхĕнчи 3-мĕш фронт çарĕсем, тăшмана çавăрса илмелли ăста маневр туса тата фронтран атакăласа, паян, июлĕн 21-мĕшĕнче, чугун çулсен пысăк узелĕ тата нимĕçсен оборонин вăйлă тĕреклетнĕ пункчĕ пулса тăракан ОСТРОВ хулине штурмласа туртса илнĕ, çав пункт вăл БАЛТИКА тăрăхĕнчи вăтаçĕрти районсем патне пымалли çулсене хÿтĕлесе тăнă.

ОСТРОВ хулине туртса илессишĕн çапăçнă чухне РОМАНОВСКИЙ генерал-лейтенантăн, ЗАХВАТАЕВ генерал-лейтенантăн, ЕГОРОВ генерал-майорăн, СТЕПАНЕНКО генерал-майорăн, КОЛЧАНОВ генерал-майорăн, КАРАПЕТЯН генерал-майорăн, ШАФАРЕНКО генерал-майорăн, БЕЛОБОРОДОВ генерал-майорăн, МИРОНЕНКО полковникăн çарĕсем; артиллери генерал-полковникĕн КРАСНОПЕВЦЕВĂН, артиллери генерал-майорĕн КУТЕЙНИКОВĂН тата ЛЕОНОВ полковникăн артиллерисчĕсем; танковăй çарсен генерал-майорĕн КОЛОСОВĂН, ЖУКОВ полковникăн, ИВАНОВИЧ полковникăн, ЖИЛА подполковникăн, ФЕДОРОВ подполковникăн танкисчĕсем; авиаци генерал-лейтенанчĕн ЖУРАВЛЕВĂН, ДОДОНОВ полковникăн, АНДРЕЕВ полковникăн, ПОЛУШКО полковникăн, ПОДМОГИЛЬНЫЙ подполковникăн, КУЛИШ подполковникăн летчикĕсем; инженери çарĕсен генерал-майорĕн КИРЧЕВСКИН, инженери çарĕсен генерал-майорĕн ЧЕПУРОВĂН тата СЕРГЕЕВ полковникăн саперĕсем; çыхăну çарĕсен генерал-майорĕн СИНЕЛЬНИКОВĂН, КОРПЛЯКОВ полковникăн, СОКОЛОВ полковникăн, КОСОБОКОВ майорăн связисчĕсем чапа тухнă.

Тунă çĕнтерĕве яланлăха палăртса хăварас тесе, ОСТРОВ хулине туртса илессишĕн çапăçнă чухне уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе чăссене «ОСТРОВСКИ» тесе ят пама тата орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, июлĕн 21-мĕшĕнче, 22 сехетре, хамăр Тăван çĕршыв столици МУСКАВ, çĕр çирĕм тăватă тупăпа вунинĕ хут пĕр харăс персе, БАЛТИКА тăрăхĕнчи 3-мĕш фронтăн паттăр çарĕсене, ОСТРОВ хулине туртса илнĕскерсене, Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан çарсене, ОСТРОВ хулине ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçусенче пулнăскерсене, питĕ чаплă çапăçнăшăн ТАВ ТĂВАТĂП.

Хамăр Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе ним кама пăхăнманлăхĕшĕн çапăçса вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене — вилĕм!

Верховный Главнокомандующи Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1944 çулхи июлĕн 21-мĕшĕ.

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Совет Союзĕн Маршалне РОКОССОВСКИЕ

БЕЛОРУССИРИ 1-мĕш фронт çарĕсем паян, июлĕн 22-мĕшĕнче, нимĕçсен Люблин хули енчи оборонин тĕреклетнĕ пахха пункчĕ пулса тăракан ХЕЛМ (ХОЛМ) хулипе пысăк чугун çул узелне штурмласа туртса илнĕ.

ХЕЛМ хулине туртса илессишĕн пынă çапăçусенче КОЛПАКЧИ генерал-лейтенантăн, ВОЛКОВ генерал-майорăн, БАРИНОВ генерал-майорăн, МОИСЕЕВСКИЙ генерал-майорăн, КЮРСУНЬ полковникăн, МАРЦИНКЕВИЧ генерал-майорăн çарĕсем; артиллери генерал-майорĕн ГОРБУНОВĂН, ЕФИМОВ полковникăн, ЗАБЕЛЛО полковникăн, УШАКОВ полковникăн, ЗНАЧЕНКО полковникăн артиллерисчĕсем; ТИХОНЧУК полковникăн, ТИМЧЕНКО подполковникăн, КОРШУНОВ майорăн танкисчĕсем; авиаци генерал-лейтенанчĕн ПОЛЫНИНĂН, авиаци генерал-майорĕн ТОКАРЕВĂН, БОРИСЕНКО полковникăн, ГРАШЕНКОВ полковникăн, КАЛИНИН полковникăн, СМИРНОВ подполковникăн летчикĕсем; техникăллă çарсен генерал-майорĕн ШАПИРĂН, СВАДКОВСКИЙ полковникăн саперĕсем; МАКАРОВ полковникăн, СТУПАЧЕНКО полковникăн, ВАКИШ подполковникăн связисчĕсем чапа тухнă.

Тунă çĕнтерĕве яланлăха палăртса хăварас тесе, ХЕЛМ хулине туртса илессишĕн пынă çапăçусенче уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе чăссене «ХЕЛМСКИ» тесе ят пама тата орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, июлĕн 22-мĕшĕнче, 22 сехетре хамăр Тăван çĕршыв столици МУСКАВ, çĕр çирĕм тăватă тупăпа вунинĕ хут пĕр харăс персе, БЕЛОРУССИРИ 1-мĕш фронтăн паттăр çарĕсене, ХЕЛМ хулине туртса илнĕскерсене, Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан çарсене, ХЕЛМ хулине ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçусенче пулнăскерсене, питĕ чаплă çапăçнăшăн ТАВ ТĂВАТĂП.

Хамăр Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе ним кама пăхăнманлăхĕшĕн çапăçса вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене — вилĕм!

Верховный Главнокомандующи Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1944 çулхи июлĕн 22-мĕшĕ.

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Арми генералне БАГРАМЯНА

БАЛТИКА тăрăхĕнчи 1-мĕш фронт çарĕсем, пехотăпа танковăй соединенисем питĕ хăвăрт атакăланă хыççăн, паян, июлĕн 22-мĕшĕнче, ПАНЕВЕЖИС (ПОНЕВЕЖ) хулипе çулйĕрсен пысăк узелне — нимĕçсен оборонин тĕреклетнĕ пахха пунктне, БАЛТИКА ТĂРĂХĔНЧЕН Хĕвелтухăç ПРУССИЕ пырса кĕмелли тĕп çулсене хÿтĕлесе тăраканскерне, туртса илнĕ.

ПАНЕВЕЖИС хулине туртса илессишĕн пынă çапăçусенче КУЗНЕЦОВ генерал-полковникăн, БАКУНИН генерал-майорăн, БОБРАКОВ генерал-майорăн, ТОЛСТОВ генерал-майорăн, ЛЕВ подполковникăн, ЗАШИБАЛОВ подполковникăн çарĕсем; артиллери генерал-майорĕн ТЕЛЕГИНĂН, САПРЫГИН полковникăн, БОЙКО подполковникăн, ШВЕЦОВ подполковникăн, ПУЗЫРЕВ подполковникăн артиллерисчĕсем; танковăй çарсен генерал-майорĕн СКОРНЯКОВĂН, МАКСИМОВ полковникăн, ГУБЕРНАТОРОВ подполковникăн танкисчĕсем; авиаци генерал-лейтенанчĕн ПАПИВИНĂН, АЛЕКСАНДРОВ полковникăн, КУРБАТОВ полковникăн, КЛУССОН подполковникăн летчикĕсем; инженери çарĕсен генерал-майорĕн БАЖЕНОВĂН, САЛЬНИКОВ подполковникăн, САРГИН майорăн, ВИНОГРАДОВ капитанăн саперĕсем; ЧЕРНОВ полковникăн, РЫБКО полковникăн связисчĕсем чапа тухнă.

Тунă çĕнтерĕве яланлăха палăртса хăварас тесе, ПАНЕВЕЖИС хулине туртса илессишĕн пынă çапăçусенче уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе чăссене «ПОНЕВЕЖСКИ» тесе ят пама тата орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, июлĕн 22-мĕшĕнче, 23 сехетре хамăр Тăван çĕршыв столици МУСКАВ, çĕр çирĕм тăватă тупăпа вунинĕ хут пĕр харăс персе, БАЛТИКА ТĂРĂХĔНЧИ 1-мĕш фронтăн паттăр çарĕсене, ПАНЕВЕЖИС хулине туртса илнĕскерсене, Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан çарсене, ПАНЕВЕЖИС хулине ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçусенче пулнăскерсене, питĕ чаплă çапăçнăшăн ТАВ ТĂВАТĂП.

Хамăр Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе ним кама пăхăнманлăхĕшĕн çапăçса вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене — вилĕм!

Верховный Главнокомандующи Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1944 çулхи июлĕн 22-мĕшĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

ИЮЛĔН 20-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Июлĕн 20-мĕшĕнче пирĕн çарсем ОСТРОВ хулинчен кăнтăртарахра тăшманпа çапăçса малалла куçса пынă, халăх пурăнакан 30 пункта ытла тытса илнĕ, вăл шутра — ДЕМЕШКИНО, ПАШКОВО, СЕРГИНО, ПЕЗЛОВО, РОГОВО, ШМАИЛИ ятлă пысăк ялсем.

ДРУЯ хулинчен çурçĕртерехре пирĕн çарсем çаплах малалла тапăнса пынă, халăх пурăнакан темиçе пункта тытса илнĕ, вăл шутра — СВАРИНЦИ, ВЕЙЗЕНИШТИ, ПЕРВЕЛИШКИ, ГЕЙБИ, СТАЙНИШКИ ятлă пысăк ялсем тата СКАИСТА ятлă чугун çул станцийĕ.

УТЕНА хулинчен çурçĕртерехре тата хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем тăшманпа çапăçса халăх пурăнакан 80 пункта ытла туртса илнĕ, вăл шутра — КАМАЯЙ, ЮРКУПЯЙ, ВИЛИ, ШААТЕШКНЯЙ, БАЯРАЙ, РЫМШАНЫ, ВОДАНЦЫ, ШВЕДАСАЙ, МИЧАНЫ, ШЛОВЯНЫ ятлă пысăк ялсем тата ПАНЕМУНЕЛИС, КЛЯПУРИШКИС, СКАПИШКИС ятлă чугун çул станцийĕсем. Пирĕн çарсем ДВИНСК хулипе ПАНЕВЕЖИС хули хушшинчи чугун çула татнă.

ВОЛКОВЫСК хулинчен хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем тăшманпа çапăçса халăх пурăнакан темиçе пункта туртса илнĕ, вăл шутра — СКРОБЛЯКИ, СТРАШЕВО, ГОРОДОК, МЕЛЕШКИ, ПОДОЗЕРАНЫ, ОЗЯБЛЫ ятлă пысăк ялсем.

БРЕСТ хули енче пирĕн çарсем, наступление вăйлатса пырса, КОБРИН хулипе пысăк чугун çул станцине, ЧЕРЕМХА ятлă узловой чугун çул станцине туртса илнĕ, çавăн пекех тата тăшманпа çапăçса халăх пурăнакан ытти 50 пункта ытла йышăннă, вăл шутра — МОХНАТА, ОРЛЯ КОШКИ, ДАШИ, ЧЕРЕМХА, ВЕРХОВИЧИ, ЛЕГАТЫ, БОРИСОВО ятлă пысăк ялсем тата НАРЕВКА, ГНИЛЕЦ, ГРИГОРОВЦЫ ятлă чугун çул станцийĕсем.

БЕЛОРУССИРИ 1-мĕш фронт çарĕсем, КОВЕЛЬ районĕнчен наступлени тума тытăнса, нимĕçсен вăйлă çирĕплетнĕ оборонине татнă та виçĕ кун хушшинче 50 километр таран малалла кайнă, татса кĕнĕ вырăна 150 километр таран сарнă. Наступлени тунă вăхăтра фронт çарĕсем Волынь облаçĕнчи район центрĕсене — ЛЮБОМЛЬ хулине, РАТНО хулине, ТУРИЙСК хулине, МАЦЕЕВ хулине, ЗАБОЛОТЬЕ тата ГОЛОВНО ялне туртса илнĕ, çавăн пекех тата тăшманпа çапăçса халăх пурăнакан ытти 400 пункта ытла йышăннă, вăл шутра — МОКРАНЫ, МАЛОРЫТА, ТУРГУТА РАТНЕНЬСКА, БУБЕЧНО, КРЫМНО, ЛЮБОХИНЫ, БУТМЕР, ЗГОРАНЫ, ЗАБУЖЬЕ, ОПАЛИН, РОМАЧИ, БЕРЕЖЦЫ, БИНДЮГА, КОРЫТНИ, НИКИТЫЧИ ятлă пысăк ялсем тата МАЛОРЫТА, ХОЦИСЛАВ, ЗАБОЛОТЬЕ, КРЫМНО, ВЫЖВА, МЫЗОВО, МОЩЕНАЯ, ТУРИЙСК, ТУРОПИН, ОВАДНО, ЧЕРКАСЫ, МАЦЕЙОВ, ПОДГОРОДНЯ, ЛЮБОМЛЬ, ЯГОДИН ятлă пысăк ялсем. Пирĕн çарсем КĂНТĂР БУГ шывĕ çине тухнă.

УКРАИНĂРИ 1-мĕш фронт çарĕсем, ăнăçлă наступление вăйлатса пырса, июлĕн 20-мĕшĕнче ВЛАДИМИР-ВОЛЫНСКИЙ тата РАВА-РУССКАЯ хулисемпе пысăк чугун çул узелĕсене штурмласа туртса илнĕ, çавăн пекех тата тăшманпа çапăçса халăх пурăнакан ытти 300 пункта ытла йышăннă, вăл шутра — ЛЬВОВ облаçĕнчи район центрĕсем ГЛИНЯНЫ хули, ПЕРЕМЫШЛЯНЫ хули тата ХРЫПАЛИЧИ, СУХОДОЛЫ, ЛИТОВИЖ, УГРЫНУВ, ВАРЕНЖ, ГУЛЬЧЕ, ПШЕМЫСЛУВ, БЕЛЗ, ДОМАШЕВ, КАРОВ, ЗАБОЖИ, ТУРЫНКА, КУЛИКОВ, ДОРОШЕВ (ЛЬВОВ хулинчен 8 километр çурçĕртерехре), ЗАПЫТОВ, СЛОВИТА, ГОЛОГУРЬЕ, РЕМИЗОВЦЫ, ПЛУГОВ, КАБАРОВЦЫ, ГЛИННА, ОЛЕСИН, ГЕЛЕНКОВ, ВИКТОРОВКА ятлă пысăк ялсем тата БУБНОВ, ЯНЕВИЧИ, ИВАНИЧИ, УЛЬВУВЕК, ЦЕЛЕНЖ, ОСТРУВ, БЕЛЗ, КОРЧУВ, ЗАПЫТОВ, КУТКОЖ, ЗБОРОВ, ПЛУГОВ, ТУСТОГЛАВЫ, ЯРЧЕВЦЫ ятлă чугун çул станцийĕсем.

БРОДЫ хулинчен хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем тăшманăн çавăрса илнĕ группировкине пĕтерсе тăкассишĕн çапăçнă, çавăрса илнĕ унка хĕссе пырса, АДАМЫ, СОКОЛОВКА, КОНТЫ, ЮШКОВИЦЫ, ОЛЕСКО ялĕсене туртса илнĕ. Тăшман çавăрса илнĕ ункăран хĕсĕнсе тухма хăтланнă, анчах та пирĕн çарсем унăн атакисене пурне те сирсе янă, ăна çынсемпе техника тĕлĕшĕнчен пысăк çухатусем кÿнĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче паллă улшăнусемех пулман.

Июлĕн 19-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕн пур фронтсенче нимĕçсен 91 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 43 самолетне персе ÿкернĕ.

☆ ☆ ☆

Июлĕн 20-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн авиаци Шауляй чугун çул узелĕнче нимĕçсен пĕр çĕре капланнă çар эшелонĕсем çине бомбăсем пăрахнă. Бомбăсем пăрахнине пула, 18 тĕлте пушар пулнă, пушарсенче вăйлă взрывсем пулнă. Уйрăмах вăйлă пушарсем чугун çул узелĕн кăнтăр пайĕнче пулнă. Тăшманăн горючи тата çар хатĕрĕсем тиенĕ эшелонĕсем çуннă. Пирĕн летчиксем Шауляйран каялла таврăннă чухне 200 километр кайсан та çав пушарсене курнă.

ИЮЛĔН 21-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

КАРЕЛИ фронтĕнче, СУОЯРВИ хулинчен çурçĕртерехре тата хĕвеланăçнерехре, пирĕн çарсем малалла тапăнса пынă, халăх пурăнакан 40 пункта ытла туртса илнĕ, вăл шутра — КУДОМ-ГУБА, ГИНДЕНВАРА, ИЛЯНВАРА, ТЕРККЕЛЯ, СУОКОНТО, ЯГЛЯЯРВИ, КИВИЯРВИ, СЕМЕЙКНА, ИОУХИКАНСЕЛЬКЯ ятлă пысăк ялсем.

БАЛТИКА тăрăхĕнчи 3-мĕш фронт çарĕсем, тăшмана çавăрса илмелли ăста маневр туса тата фронтран атакăласа, июлĕн 21-мĕшĕнче çулсен пысăк узелĕ тата нимĕçсен оборонин хăватлă тĕреклетнĕ пункчĕ пулса тăракан ОСТРОВ хулине штурмласа туртса илнĕ, çавăн пекех тата тăшманпа çапăçса халăх пурăнакан 150 пункта ытла йышăннă, вăл шутра — ВОЛКОВО, СРЕХОЗО-ГОРА, ЖИГУЛИХА, АСТРАТОВА, КРЮКОВО, КОЛОМНИЦА, ТИШИНО, БОРОВСКАЯ, ЕЛИНЫ, СЕМЕХИНО, ГАВРИ ятлă пысăк ялсем тата ЧЕРСКАЯ, ДУЛОВСКАЯ, БРЯНЧАНИНОВО ятлă чугун çул станцийĕсем.

БРЕСТ хули енче пирĕн çарсем тăшманпа çапăçса малалла куçса пынă, Брест облаçĕнчи район центрне ДИВИН ялне, Волынь облаçĕнчи район центрне ШАЦК ялне туртса илнĕ, çавăн пекех тата тăшманпа çапăçса халăх пурăнакан ытти 100 пункта ытла йышăннă, вăл шутра — МЕЛЕЙЧИЦЫ, АЛЕКСАНДРОВКА, СЕМИХОЧИ, СТАВЫ, ВЕЛЬКОРЫТА, ДУБЕЧНО, ОРЛЯНКА РОГОЗНА, МЕДНА, ПИЩА ятлă пысăк ялсем тата НУРЕЦ, ПОЖЕЖЫН ятлă чугун çул станцийĕсем.

ЛЮБОМЛЬ хулинчен хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем 60 километр сарлакăш фронтра ХĔВЕЛАНĂÇ БУГ шывĕ урлă каçнă та, тăшман хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкса, çав шывăн хĕвеланăç енче 15 километр таран малалла кайнă, халăх пурăнакан 50 пункта ытла йышăннă, вăл шутра — ЗБЕРЕЖЕ, СТУЛЬНО, КОСЫНЬ, МАЦОШИН, БЫТЫНЬ, БУКОВО ВЕЛЬКЕ, УГРУСК, СЕДЛИЩЕ, РУДКА, ЖАЛИН, СВЕЖЕ, ДОРОГУСК, ГУСЫННЕ, УХАНЬКА, ДУБЕНКА ятлă пысăк ялсем тата УГРУСК, ДОРОГУСК ятлă чугун çул станцийĕсем.

Пирĕн çарсем БРЕСТ хулипе ХОЛМ хули хушшинчи чугун çулпа шоссе çулне татнă.

ВЛАДИМИР-ВОЛЫНСКИЙ хулинчен хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем çаплах наступлени туса пынă, Волынь облаçĕнчи район центрне УСЬТИЛУГ хулине туртса илнĕ, çавăн пекех тата тăшманпа çапăçса халăх пурăнакан ытти 100 пункта ытла йышăннă, вăл шутра — ВЫДРАНКА, ЧЕРНИКОВ, ЛУДЗИН, МЛЫНИСКА, ГОЛУБЕ, ВИТКУВ, ВАСИЛОВ, ТЕЛЯТЫН-ПОСАДУВ, ПОДЛЕДУВ, ШЛЯТЫН, ХОДЫВАНЬЦЕ ятлă пысăк ялсем тата УСЬТИЛУГ, ИЗУВ ятлă чугун çул станцийĕсем.

ЛЬВОВ хули енче пирĕн çарсем çаплах ăнăçлăн малалла тапăнса пынă, халăх пурăнакан 100 пункта ытла туртса илнĕ, вăл шутра — УГНЕВ, ЖУРАВЦЫ, ЛЮБЫЧА, КРУПЕЦКА, ВЕРХРАТА, ПОТЫЛИЧ, ПОМЛЫНУВ, ВИОНЗОВА, ЗАШКОВ, ЛЯХОДОВ, СВИРЖ, ЖУКОВ, ГРАБОВЦЫ, ЗБОРОВ, ЦЕНЮВ ятлă пысăк ялсем тата УГНЕВ, ЗЕЛЕНА, ЛЮБЫЧА, ГРЕБЕННЕ, ВЕРХРАТА, КАМИОНКА ятлă чугун çул станцийĕсем.

БРОДЫ хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем тăшманăн çавăрса илнĕ группировкине пĕтерсе тăкассишĕн çапăçнă, çавăрса илнĕ унка хĕссе пырса, ЗАКОМАЖЕ, ПОДЛЕСЬЕ, ЖУЛИЦЫ, БЕЛЗЕЦ, ПЕТРЫЧИ ялĕсене туртса илнĕ. Унти çапăçусенче тăшман çынсемпе техника тĕлĕшĕнчен пысăк çухатусем тÿснĕ. 2.000 нимĕç салтакĕпе офицерне ытла тыткăна илнĕ, 100 тупă ытла тытса илнĕ.

ТАРНОПОЛЬ хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем, тăшман хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкса, Тарнополь облаçĕнчи район центрĕсене — БУЧАЧ хулипе чугун çул станцине, КОЗОВА тата ЗОЛОТНИКИ ялĕсене туртса илнĕ, çавăн пекех тата тăшманпа çапăçса халăх пурăнакан 60 пункта ытла йышăннă, вăл шутра — ЛЕНЧУВКА, МОНДЗЕЛОВКА, КУРДВАНУВКА, ЕЗЕЖАНЫ, ЗУБЖЕЦ, СОКОЛОВ, ЯЗЛОВЕЦ, ДУЛИБЫ ятлă пысăк ялсем тата КОЗОВА ятлă чугун çул станцийĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче паллă улшăнусемех пулман.

Июлĕн 20-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕн пур фронтсенче нимĕçсен 95 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 78 самолетне персе ÿкернĕ.

СССР СОВНАРКОМĔПЕ ВКП(б) ЦЕНТРАЛЬНЫЙ КОМИТЕТĔНЧЕ

1944 çулта тырпул пухса кĕртесси тата ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлесси çинчен

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ çакна палăртаççĕ: 1944 çулта вăрçăн йывăр условийĕсене пăхмасăрах, колхозсем, МТС-семпе совхозсем çуракине пĕлтĕрхинчен нумай ăнăçлăрах туса ирттерчĕç, уйхир ĕçĕсен пахалăхне чылай лайăхлатрĕç, çакă ĕнтĕ кăçалхи çул тĕштырăсемпе ытти ялхуçалăх культурисене тухăçлăн туса илме, ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлемелли плана пурнăçа кĕртме, вăрлăх фончĕсене хывса хăварма тата колхозниксене ĕçкунĕсем тăрăх тĕштырăсемпе ялхуçалăх продукчĕсем ытларах валеçсе пама май парать.

Нимĕç оккупацийĕнчен ирĕке кăларнă районсенчи колхозниксемпе колхозницăсем, МТС-семпе совхозсен работникĕсем, ялхуçалăхне тăшман пысăк сиен кÿнине пăхмасăрах, государствăн çуртыррисем акмалли планне тултарчĕç, çурхи уйхир ĕçĕсене ăнăçлăн туса ирттерчĕç, вăйлă тырпул туса илмелли кирлĕ майсене туса хучĕç.

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ çапла шутлаççĕ: колхозсемпе МТС-сен тата совхозсен мĕнпур вăйĕсемпе майĕсене тырпула кĕске сроксенче тата пĕр тăккаламасăр пухса кĕртнĕ çĕре, ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлемелли плансене вăхăтра тултарнă çĕре мобилизацилемелле, çапла вара вăрçăн татăклă тапхăрĕнче Хĕрлĕ Çарпа çĕршыва çителĕклĕ таран апат-çимĕç, промышленноçа — чĕртавар туса памалла.

Тырпулсене пухса кĕртессипе ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлессине пĕтĕм халăхăн чи паха ĕçĕ вырăнне хурса, СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ вырăнти партипе совет тата çĕрĕç органĕсем умне, мĕнпур колхозсемпе МТС-сем тата совхозсем умне çакăн пек задачăсем лартаççĕ:

тырпулсене пухса кĕртме мĕнпур комбайнсене, тракторсене, жнейкăсемпе лобогрейкăсене, çавăн пекех тата çавасемпе çурласене тата алпа ĕçлемелли ытти тĕрлĕ инвентаре вăхăтра хатĕрлесе çитермелле;

тырпулсене пухса кĕртнĕ çĕре колхозсемпе МТС-сенчи, совхозсемпе подсобнăй хуçалăхсенчи мĕнпур ĕç вăйне мобилизацилемелле тата ĕçе тĕрĕс организацилемелле. Колхозсемпе совхозсене тырпулсем пухса кĕртес ĕçре пулăшма хуласемпе район центрĕсенчи тата рабочи поселокĕсенчи халăха мобилизацилемелле;

тырпулсене пухса кĕртнĕ çĕре тата государство валли ялхуçалăх продукчĕсем турттарнă çĕре мĕнпур лашасене пĕтĕмĕшпех явăçтармалла, вĕсемпе тĕрĕс усă курмалла, çăмăлрах ĕçсенче вара колхозсемпе совхозсен выльăх-чĕрлĕх фермисенчи сĕт сахал паракан ĕнесемпе те, колхозниксемпе рабочисен, служащисен ĕнисемпе те усă курмалла;

тырпулсене пухса кĕртес ĕçе вăраха тăсас мар тесе, тырпулсене вырса пухма мĕнпур комбайнсене, колхозсемпе МТС-сенчи, совхозсенчи тырă вырмалли мĕнпур машинăсене тата ытти тĕрлĕ ĕçхатĕрĕсене çийĕнчех ĕçе ямалла;

локомобильсене, молотилкăсене, лашапа ĕçлемелли приводсене, тырă тасатмалли машинăсене, автомашинăсене, лашапа ĕçлемелли транспорт инвентарьне пĕтĕмĕшпех хатĕрлесе çитермелле, тырă вырма тытăннă малтанхи кунсенчен пуçласах, кĕлте турттарса капана хывассине, тата тырă çапассине тата государствăна тĕштырă, çавăн пекех ытти тĕрлĕ ялхуçалăх продукчĕсем парассине çийĕнчех организацилемелле;

тырă вырса пухнă çĕрте, авăн çапнă çĕрте тата тырпул турттарнă çĕрте тырпула çирĕп шута илессине, ăна лайăх хуралласа сыхлассине организацилемелле, тырпула пăсалма е тăккаланма памалла мар, тĕштырăпа ытти тĕрлĕ ялхуçалăх продукчĕсене типтерсĕр тыткаланине, вĕсене салатса е вăрласа пĕтерессине хирĕç татăклăн кĕрешмелле;

вăрлăх участокĕсенчи тырпула вăхăтра вырса илсе çапса пуçтарас ĕç çине уйрăмах тимлĕн çавăрăнса пăхмалла, мĕнпур вăрлăх материалне пĕтĕмĕшпех упраса хăвармалла;

государствăна тĕштырăпа ытти тĕрлĕ ялхуçалăх продукчĕсем парассине мĕнпур партипе совет, хатĕрлевпе çĕрĕç органĕсен, колхозсемпе совхозсен тата подсобнăй хуçалăхсен вăрçăпа хуçалăх тĕлĕшĕнчи чи кирлĕ задачи вырăнне хурса, государствăна тĕштырăпа ытти тĕрлĕ ялхуçалăх продукчĕсем памалли плансене кашни колхоз, кашни совхозпа подсобнăй хуçалăх енĕпе правительство кăтартнă срокĕсенче пĕр сăмахсăрах пурнăçа кĕртмелле тăвас пулать;

колхозсемпе МТС-сене тата совхозсене тырпул пухса кĕртес тата государствăна ялхуçалăх продукчĕсем парас ĕçре промышленность предприятийĕсем, хуласенчи организацисемпе учрежденисем енчен, МТС-семпе колхозсене тата совхозсене ремонт бригадисем ярса, автотранспорт, лашасем, ытлашши оборудовани, запаслă пайĕсем, материалсемпе инструментсем парса, пур майсемпе те пулăшассине организацилемелле.

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ çапла йышăннă:

СССР Çĕрĕç Халăх Комиссариатне, СССР Совхозсен Халăх Комиссариатне, СССР Апат-çимĕç промышленность Халăх Комиссариатне, СССР Аш-какайпа сĕт-çу промышленность Халăх Комиссариатне, Хатĕрлев Халăх Комиссариатне, подсобнăй хуçалăхсем тытакан мĕнпур наркоматсене, облисполкомсене, крайисполкомсене, республикăсен Совнаркомĕсене, союзлă республикăсенчи компартисен Центральнăй Комитечĕсене, парти крайкомĕсемпе обкомĕсене тата райкомĕсене, райисполкомсене, МТС-семпе совхозсен директорĕсене, ялсоветсемпе колхозсен председателĕсене çапла тума хушас:

I.

Тырпулсене пухса кĕртме хатĕрленес тата çав ĕçе туса ирттерес енĕпе

1. Тырпулсене пухса кĕртес ĕç пуçланиччен кашни район, МТС, колхоз тата совхоз тырпулсене пухса кĕртме мĕнле хатĕрленнине государство енчен тĕрĕслесе тухмалла, çав ĕçе туса ирттерме республика Совнаркомĕсен, крайисполкомсен, облисполкомсен, союзлă республикăсенчи компартисен Центральнăй Комитечĕсен ертсе пыракан работникĕсене уйăрмалла, тырпулсене пухса кĕртме хатĕрленес ĕçре палăрнă çитменлĕхсене пĕтерме çийĕнчех кирлĕ мерăсем йышăнмалла.

2. Кашни колхозра, МТС-ра тата совхозра, кашни трактор бригадинче тата уйхир бригадинче тырпулсене пухса кĕртмелли ĕç планĕсене вăхăтра тумалла, çав плансем тăрăх колхозсемпе совхозсенчи тата МТС-сенчи мĕнпур ĕç вăйĕпе, комбайнсемпе, жнейкăсемпе, тырă вырмалли ытти тĕрлĕ машинăсемпе, тракторсемпе тата чĕрĕ туртăм вăйĕпе ĕçре туллин усă курассине палăртса хумалла. Тырпулсене пухса кĕртнĕ çĕрте ĕçлеттерме колхозсен шалти ĕçĕсенче, подсобнăй предприятийĕсенче тата отраслĕсенче ĕçлекен работниксене май килнĕ таран ытларах хăтармалла.

3. Тырпулсене пухса кĕртес ĕçсем пуçланиччен мĕнпур комбайнсене, тракторсене, молотилкăсене, лашапа ĕçлемелли приводсене, локомобильсене, автомашинăсене, тырă вырмалли çăмăл машинăсене, çавасемпе çурласене тата ытти тĕрлĕ тырра пуштармалли хатĕрсем, зерноулувительсем, çулăма купаласа хăвармалли, выртнă тырра вырмалли хатĕрсем ятарласа туса лартмалла, моторсем е хедерсем çук пирки тырă вырнă çĕрте усă курма май килмен комбайнсене юсаса, вĕсемпе авăн çапнă çĕрте усă курмалла. Моторсем çук комбайнсен хедерĕсене тырă вырнă çĕрте усă курмалла туса йĕркелемелле.

Комбайнсене государство комиссийĕ тĕрĕслесе йышăннă чухне вĕсене ĕçлеттерсе пăхма, çавăн хыççăн тин вара комбайн тырă вырса пухнă çĕрте ĕçлеме хатĕррипе хатĕр маррине татса пама кирлĕ тесе шутлас.

4. СССР Çĕрĕç Халăх Комиссариатне, СССР Совхозсен Халăх Комиссариатне, СССР Апат-çимĕç промышленность Халăх Комиссариатне, СССР Аш-какайпа сĕт-çу промышленность Халăх Комиссариатне, облаçсенчи, крайсемпе республикăсенчи партипе совет организацийĕсене, МТС-семпе совхозсен директорĕсене çапла тума хушас:

а) тырă вырма тухиччен комбайнăн кашни агрегачĕ çумне лайăх вĕрентсе хатĕрленĕ комбайнера, комбайнерăн помощникне тата трактористсене уйăрса çирĕплетмелле. Ĕçе тухиччен мĕнпур комбайнерсене пухса, комбайнсене ĕçлеттерес тата вĕсене техника тĕлĕшĕнчен пăхса тăрас ыйтусем тăрăх кĕске вăхăтлăх [illegible]

(Малалли 2-мĕш страницăра).

1944 çулта тырпул пухса кĕртесси тата ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлесси çинчен

Малалли. Пуçламăшĕ 1-мĕш страницăра.

летнĕ планпа килĕштерсе, кашни комбайн агрегачĕ çумне тырпул участокĕсем вырăна тухса çирĕплетсе памалла, уборка пуçланиччен 5 кун малтан вара мĕнпур комбайнсемпе тракторсене вĕсем ĕçлеме тивĕçлĕ вырăна илсе çитермелле;

в) тырă вырса пухмалли мĕнпур тапхăр валли кашни комбайн агрегачĕ çумне — комбайна çул уçса пама, кĕтессене вырма, горючи турттарма, комбайн çапнă тĕштырра тасатса типĕтме колхозниксен тата совхозсенчи рабочисен тивĕçлĕ ушкăнне ялан ялах уйăрса çирĕплетмелле, вĕсене тырă тасатмалли машинăсем тата лашасем тивĕçлĕ таран уйăрса памалла;

г) тырпулсене пухса кĕртнĕ çĕрте комбайнсемпе тракторсене пĕр чарăнмасăр ĕçлеттермелле тăвас тесе кашни МТС-па совхозрах кашни 10 комбайн агрегачĕ валли куçса çÿрекен пĕрер автомастерской е тата кашни 5 комбайн агрегачĕ валли лашапа туртса çÿрекен пĕрер мастерской туса хатĕрлемелле.

Куçса çÿрекен мастерскойсем валли ремонт тăвакан рабочисен лайăх вĕрентсе хатĕрленĕ кадрĕсене тупса памалла, кашни комбайн агрегачĕ валли инструментсем тата комбайнсене хиртех техника тĕлĕшĕнчен пăхса тухса юсама кирлĕ уйăрмах шĕтекен запаслă пайсем, çавăн пекех тата горючипе çу ямалли инвентарь, пушаран сыхланмалли хатĕрсем тупса памалла.

5. МТС-семпе совхозсен директорĕсене молотилкăсен, нефтедвигательсемпе локомобильсен машинисчĕсене вĕрентсе хатĕрлес тĕлĕшпе кĕске вăхăтлăх курссем ирттерме хушас; çав курссене кашни молотилкăпа двигатель валли икшер машинист вĕрентсе хатĕрлес шутпа туса ирттермелле.

6. Колхозсен правленийĕсемпе, совхозсемпе МТС-сен директорĕсене лашапа ĕçлекен машинăсем çинче ĕçлеме кирлĕ таран колхозниксемпе совхозсенчи рабочисене халех уйăрса пама хушас; çав колхозниксемпе рабочисене сноповязалкăсене, жнейкăсемпе лобогрейкăсене юсанă çĕре явăçтармалла, вĕсене машинăсемпе ĕçлеме уборка пуçланиччен пĕтĕмĕшпех вĕрентсе хатĕрлесе çитермелле.

Çавапа çулаканесене суйласа илесси тата вĕсен ĕçне тĕрĕс организацилесси çине уйрăмах тимлĕн çавăрăнса пăхмалла, вĕсем валли çавасене хăйраса тÿрлетме кирлĕ инструментсем тупса памалла. Утă çулма начартарах пĕлекен колхозниксемпе колхозницăсене пулăшас шутпа, утă çулакансен кашни ушкăнĕ çумне ку тĕлĕшпе опытлă колхозник уйăрса çирĕплетсе памалла.

7. Тырă вырмалли çăмăл машинăсене юсас ĕçре, çавăн пекех трактор бригадисемпе комбайнсен агрегачĕсене пулăшас ĕçре пысăк вырăн йышăнса тăракан колхоз тимĕрçисен ĕçне йĕркелесе ямалла; райсовет исполкомĕсемпе парти райкомĕсене çав ĕçре кашни колхоза шур тĕлĕшрен те пулăшу парса тăма хушас.

8. Облисполкомсене, крайисполкомсене, республикăсен Совнаркомĕсене, парти обкомĕсемпе крайкомĕсене тата союзлă республикăсенчи компартисен Центральнăй Комитечĕсене тракторсемпе тырă вырмалли машинăсем валли запаслă пайсем туса кăларас тĕлĕшпе панă заданисене кашни предприяти тăрăх пĕр сăмахсăрах пурнăçламалла тума хушас, çавăн пекех тата уйрăм узелсем туса хатĕрлес е вĕсене юсас, комбайнсене вир, хуратул, хĕвелçаврăнăш тата вăрлăхлăх акнă курăксем вырса пуçтармалла туса йĕркелес тĕлĕшпе МТС-семпе совхозсене тата колхозсене пулăшу парассине организацилеме хушас.

9. Тĕштырра вăхăтлăха хурса усрама — витнĕ итемсемпе лупасайсем, яланлăха хурса усрама — амбарсем кирлĕ таран хатĕрлесе хумалла.

Çурçĕрти тата центрти районсенче, çавăн пекех Çĕпĕрпе Уралта тата Хĕвелтухăçĕнче, тырпул пухса кĕртнĕ тапхăрта çанталăк нумай вăхăт хушши йĕпе-сапаллă тăнипе тĕштырă пăсăлас хăрушлăх нур çĕрте, кашни колхозпа совхозрах çăмăл майпа тырă типĕтмелли сушилкăсем тумалла тата шур пек сушилкăсене юсамалла, çавăн пекех хутса ăшăтакан çÿрт-йĕрсене тырă типĕтмелле туса йĕркелемелле.

10. Облисполкомсене, крайисполкомсене, республикăсен Совнаркомĕсене, парти обкомĕсемпе крайкомĕсене тата союзлă республикăсенчи компартисен Центральнăй Комитечĕсене тырпул пухса кĕртес, государство валли тырпулсемпе ытти тĕрлĕ ялхуçалăх продукчĕсем турттарас тĕлĕшпе ĕçлеме колхозсемпе совхозсенчи чĕрĕ туртăм вăйне тата транспорт инвентарьне хатĕрлесе çитерес енĕпе тивĕçлĕ мерăсем йышăнма хушас; лашасемпе тата вăкăрсемпе шалти ĕçсенче усă курассине май килнĕ таран ытларах чакармалла.

11. Колхозсемпе совхозсенче чĕрĕ туртăм вăйĕ тата автотранспорт хатĕрĕсем çитеймессĕррине шута илсе, тырă тырпула тата ялхуçалăх продукчĕсем турттарнă тапхăрта выльăх-чĕрлĕх фермисенчи сĕт сахал паракан ĕнесемпе, çавăн пекех тата колхозниксен ĕнисемпе те колхозăн шалти ĕçĕсенче, пуринчен ытла уйхир ĕçĕнче, усă курмалла, çавăн пекех тата кирлĕ вăхăтра колхозниксен ĕçе юрăхлă кашни ĕнипе çуллахи уйăхсенче хатĕрлев пункчĕсене, 10 километртан инçе мар вырăнсене, пĕр тоннăран пуçласа 2 тоннăна çити тырă турттарма обязательнăй йĕркепе заданисем пама райисполкомсене ирĕк парас.

Çапла йĕрке тăвас: ĕнепе ĕçленĕ чухне çав ĕне хуçи кăпа унпа ĕçлеме пултарать.

Хăйсен ĕнисемпе ĕçлекен колхозниксене тÿленĕ пек, натурăпа тÿлемелли йĕрке тăрăх, тырă турттарнă çĕре рабочисемпе служащисен ĕнисене те явăçтарма ирĕк парас. Çапла йĕрке тăвас: рабочисемпе служащисен ĕнисене тырă турттарнă çĕре, çав ĕнесемпе вĕсен хуçисем е вĕсен çемьисен членĕсем ĕçлеме шултарсан кăна, явăçтармалла.

Колхозсен председателĕсемпе совхозсен директорĕсене тырă вырма тухиччен малтанах ĕçре усă курма тивĕçлĕ ĕнесене палăртса хума тата вĕсене ĕçе йышăнассине организацилеме хушас.

Вырăнти промышленность предприятийĕсемпе промысла артелĕсенче ĕçе кÿлекен ĕнесем валли кÿлмелли хатĕрсем (сÿсменсемпе пăявсем, постромкăсем), çавăн пекех тата урапа сĕрмелли мас туса кăларассине организацилемелле.

12. Уборкăна ăнăçлăн ирттерес ĕçре тракторсемпе комбайнсем валли горючипе сĕрмелли çусем çителĕклĕ хатĕрлесе хуни питех те пысăк вырăн йышăнса тăнине шута илсе, СССР Совнаркомĕ çумĕнчи Главнефтеснаба, Çулйĕр Халăх Комиссариатне, Юханшыв Флочĕн Халăх Комиссариачĕпе Тинĕс Флочĕн Халăх Комиссариатне горючи туртармалли вырăнсене тата юханшывсен хĕррисенчи нефтебазăсене горючипе сĕрмелли çусене вăхăтра пухса хурассине, перевалкăсем патне пушă цистернăсем çителĕклĕ таран илсе пырассине, нефть продукчĕсене ялхуçалăхĕ валли вăхăтра тиесе ăсатассине, МТС-семпе совхозсене, Союззаготтранспа Совхозтрансăн автоотрячĕсене уборкăпа тырпул хатĕрлес вăхăт валли горючипе сĕрмелли çусем татти-сыпписĕр парса тăрассине йĕркелеме хушас.

13. Облисполкомсене, крайисполкомсене, автономиллĕ республикăсен Совнаркомĕсене кашни район тăрăх, союзлă республикăсен Совнаркомĕсене вара — кашни область тăрăх МТС-семпе совхозсене, подсобнăй хуçалăхсене, Союззаготтранспа Совхозтрансăн автоотрячĕсене уборка вăхăчĕ валли мĕн чухлĕ горючи тата сĕрмелли çусем кирлĕ пулассине палăртса хума, уборка валли турттарса пыракан нефть продукчĕсене нефтебазăсем тăрăх мĕн чухлĕ тĕрĕс валеçнине çирĕп контроллесе тăма хушас, çак ĕçе ертсе пырассине облисполкомăн, крайисполкомăн, республика Совнаркомĕн председателĕн заместителĕсенчен пĕрин çине хумалла.

Инçетре ларакан МТС-сене, çавăн пекех тата мĕнпур совхозсене горючи шурринчен малтан турттарса хумалла тăвас пулать.

14. Чугун çулсен начальникĕсене тата СССР Совнаркомĕ çумĕнчи Главнефтеснабăн Управленине ялхуçалăхĕ валли нефть продукчĕсем ăсатма организациленĕ хупă маршрутсене уйрăм пунктсенче тата çав маршрутсем каяс çулсем çинче чарса тăма ваклама чарас.

Облисполкомсене, крайисполкомсене, республикăсен Совнаркомĕсене хупă маршрутсене вăхăтра организацилессине тата вĕсене хăвăртрах çÿретессине, вĕсем çулсем тăрăх мĕнле куçса пынине, нефть продукчĕсене нефтебазăсенче вăхăтра пушатнине, пушатнă хыççăн цистернăсене халех маршрута мĕнле пухнине тата вĕсене нефть продукчĕсем тултаракан вырăна çийĕнчех çитерессине çирĕп контроллесе тăма хушас.

15. Çапла йĕрке тăвас: уборка ирттерме тата инçетри пунктсенчен тырă турттарма 1944 çулхи июль, август тата сентябрь уйăхĕсем валли уйăрнă горючи лимичĕсем 1944 çулхи пĕтĕм виççĕмĕш кварталта та юрăхлă пулса тăраççĕ.

16. СССР Совнаркомĕ çумĕнчи Главнефтеснаба, нефтеснабăн вырăнти управленийĕсене, облаçсемпе крайсенчи тата республикăсенчи совет тата парти органĕсене уборка ирттерме, тырă турттарма тата уборкăпа пĕр вăхăтра килекен ытти тĕрлĕ ялхуçалăх ĕçĕсене туса ирттерме кÿрсе килнĕ нефть продукчĕсене урăх потребительсене пама чарас.

Уборка ирттерме тата тырă турттарма кÿрсе килнĕ горючипе çусене вырăнсăр расходланăшăн, вĕсене салатса пĕтерпĕшĕн айăплисене ответ тыттармалла тăвас.

а) Тĕштырăсемпе çу тумалли культурăсене пухса кĕртес енĕпе

17. Тырпулсене вăхăтра тата нĕр тăкаламасăр пухса кĕртес шутпа, комбайнсене, жнейкăсемпе лобогрейкăсене, тырă вырмалли ытти машинăсене пĕр чарăнмасăр ĕçлеттермелле, çавăн пекех тата тырра алăпа вырса пуçтарассине те организацилемелле.

18. СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ облаçсемпе, республикăсенчи мĕнпур совет, парти, çĕрĕç органĕсене, МТС-семпе колхозсене тата совхозсене тырпула тăкаланине хирĕç куллен кĕрешессине, тырпула уйхирте, вырнă чухне, çапнă чухне, турттарнă чухне тата усранă чухне çирĕп хураллаccа сыхлассине организацилеме хушаççĕ.

Çав шутпа çаксене туса ирттермелле:

а) тырпула машинăсемпе вырнă е алăпа çулнă хыççăн çийĕнчех кĕлте çыхмалла, кĕлтесене пуçтарса çĕмелсемпе майрапуçсем тумалла, çавăн пекех тата тĕплĕн пучах пухассине те организацилемелле, çак ĕçе, пысăккисемпе пĕрлех, пĕчĕк ачисене те анлăн явăçтармалла. Комбайнсемпе вырса пуçтарма уйăрса панă вырăнсенче комбайнсем юсавлă мар пирки чарăнса ларсан, тырпула çăмăл машинăсемпе е алăпа вырмалла, тырра пиешле те тăкăнма памалла мар;

б) тырă вырма пуçланă хыççăн 5 кунран кая юлмасăр авăн çапма тытăнмалла, авăна массăллăн çапассине кая хăвармалла мар. МТС-семпе колхозсен тата совхозсен мĕнпур сложнăй молотилкисемпе тата лашапа ĕçлекен молотилкисене талăкĕ-талăкĕпех ĕçлеттермелле тăвас пулать.

Авăн çапассипе кĕлте турттарса капана хывассине пĕр вăхăтрах туса пыма колхозсенче ĕç вăйĕпе туртăм вăйĕ çителĕксĕр пулсан, колхозсен кĕлте тиесе çитнĕ хыççăн, мĕнпур вырнă тырра турттарса çийĕнчех капана хывмалла, çав ĕçе тырă вырса пĕтернĕ хыççăн 10—15 кунран кая хăвармасăр вĕçлемелле;

в) колхозниксенчен тата совхозсенчи рабочисенчен вĕсем вырса пуçтарнă участоксене обязательнăй йĕркепе йышăнмалла тăвас пулать: колхозсенче — çав участоксене уйхир бригадин бригадирĕсем, совхозсенче вара — отделени управляющийĕсем кашни кунах йышăнса тăраççĕ, колхоз председателĕ е совхоз директорĕ — 5 кунта пĕрре йышăнать. Ĕçе тĕрĕслесе йышăннă чухне тырпула мĕнле пахалăхпа вырса пуçтарни çине уйрăмах тимлĕн çаврăнса пăхмалла, пучахсене уйра пăрахса хăвармалла мар, палăрнă çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе çийĕнчех мерăсем йышăнмалла;

г) комбайнсемпе молотилкăсем çапса кăларнă мĕнпур нÿрĕ тырра çийĕнчех итемсенче тата сушилкăсенче типĕтессине организацилемелле, тырпула кушăсенче хĕрсе кайма памалла мар;

д) уйхирти вырман тырпула, çавăн пекех çулнă тата çĕмелсем тунă тырпула сыхлама тырă шуличчен 10—15 кунран кая юлмасăр ятарласа объездчиксем уйăрмалла. Итемсем çинче икĕ сменăпа хурал тăратмалла. Çапла йĕрке тăвас: объездчиксемпе хуралçăсен тырпула талăкĕпех хураллламалла пулать, вĕсем тÿрремĕнех колхоз председательне, совхоз отделенийĕн, фермин управляющийĕсене пăхăнса тăраççĕ. Тырпула хураллалнă çĕре самрăксене явăçтармалла. Çамрăксенчен тырпула хураллакан постсем организацилемелле;

е) пухса илнĕ тырпула мĕнпур ĕçсен тапхăрĕнче çирĕп шута илсе пымалла тăвас пулать. Тырра молотилкăсем, комбайнсем патĕнче тата ăна амбарсене йышăннă чухне обязательнăй йĕркепе висмелле. Тырра итемсенчен амбарсене тата хатĕрлев пункчĕсене леçнĕ чухне тырă турттаракан çыннăн хушаматне, мĕн чухлĕ тиенине, тырă мĕнле сортлă пулнине тĕрĕс кăтартса çырнă накладнойсемпе ăсатмалла.

19. Райисполкомсен председателĕсене, парти райкомĕсен секретарĕсене тырпула уйхирте, итемсем çинче, çапнă тата турттарнă чухне тĕрĕс сыхласа усрассине тата тĕрĕс шута илессине контроллесе тăма хушас; опытлă колхозниксенчен, МТС-семпе совхозсенчи рабочисенчен тырă висекенсене, кладовщиксене, хуралçăсене, объездчиксене тата тырă турттарас тĕлĕшпе ĕçлекен старши обозникĕсене суйласа илмелле.

б) Çĕрулмипе пахча-çимĕçсем пухса кĕртес енĕпе

20. Çĕрулмипе пахча-çимĕçсене кĕркунне çĕр шăнтма пуçличчен пухса кĕртмелле. Кун касиччен кăларнă çĕрулмипе каснă пахча-çимĕçсене куллен пухса пымалла. Çĕрулми кăларнă хыççăн çĕрулми пулнă участоксене сÿрелемелле тата ялан тенĕ пекех тепĕр хут сухаласа, ун хыççăн тухнă çĕрулмине пухас ĕçе организацилемелле.

21. Кăларнă çĕрулмипе пухнă пахча-çимĕçсене типĕтнĕ хыççăн куллен хранилищĕсене турттармалла е уйра вăхăтлăха купаласа хумалла, çав купасенчен малашне хатĕрлев пункчĕсене турттармалла е кĕркунне çĕр шăнтма тытăниччен нумай вăхăтлăха усрама шанчăклă купасем хывмалла. Вăрлăхлăх акнă пахча-çимĕçсен тунисене вĕсем пулса çитнĕ май суйласа илсе касассине тата вĕсене лупасайсенче типĕтессине анлăн йĕркелемелле, вырăнтан-вырăна куçарнă чухне вăрлăха тăкăнма памалла мар.

22. Хатĕрлев пункчĕсенче çĕрулмипе пахча-çимĕçсене хатĕрлев тата суту-илÿ организацийĕсен сушилкисенче, çавăн пекех тата колхозсенче те, колхозниксен килĕсенче те типĕтессине организацилемелле.

в) Сахăр кăшманĕ пухса кĕртес енĕпе

23. СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ çĕрĕç, совет тата парти органĕсене, колхозсене, МТС-семпе совхозсене кăçалхи çул сахăр кăшманне вăхăтра та пĕр тăкаламасăр пухса кĕни пысăк вырăн йышăнса тăни çине тимлĕн çаврăнса пăхма хушаççĕ. Çав шутпа, сахăр кăшманне массăллăн кăларма, Узбек, Казах тата Киргиз ССР-семсĕр пуçне, сентябрĕн 10-мĕшĕнче тытăнмалла, çÿлерех кăтартнă республикăсен вара августăн 20—25-мĕшĕсенче тытăнмалла.

Сахăр кăшманĕ акакан вырăнсенчи облисполкомсемпе крайисполкомсене тата республикăсен Совнаркомĕсене сахăр кăшманĕ кăларма пуçламалли срокĕсене уйрăм районсемпе колхозсем тăрăх, сахăр кăшманĕ мĕнлине кура, палăртса хума хушас, анчах та çакна шута илмелле: сахăр завочĕсене ĕçе янă тĕле завод территорийĕнче пилĕк кунлăхран кая мар кăшман запасĕ пулмалла, кайран вара сахăр завочĕсене татти-сыпписĕр кăшман парса тămалла.

24. Сахăр кăшманне çак срокСенче кăларса, турттарса пĕтермелле:

	кăлармалла	турттармалла
Узбек, Киргиз тата Казах ССР-сенче	15.XI	15.XII
Грузин, Армян ССР-сенче тата Краснодар крайĕнче	5.XI	25.XI
Красноярскпа Алтай крайĕсенчи шыв сывăхĕнчи районсенче	1.X	20.X
Красноярскпа Алтай крайĕсен ытти районĕсенче, Кемеровăпа Новосибирск облаçĕнче, Бурят-Монголипе Пушкăрт АССР-сенче	10.X	10.XI
Украина ССР-че тата Курск облаçĕнче	20.X	1.XII
Сахăр кăшманĕ акакан ытти районсенче	20.X	20.XI

25. СССР Çĕрĕç Халăх Комиссариатне, СССР Апат-çимĕç промышленность Халăх Комиссариатне, сахăр кăшманĕ акса тăвакан районсенчи партипе совет организацийĕсене çапла тума хушас:

а) МТС-семпе колхозсенчи сахăр кăшманĕ кăларма кирлĕ инвентаре (свеклоподъемниксене, ятарласа тунă кĕреçесемпе ытти хатĕрсене) юсамалла, çавăн пекех купасене хывнă сахăр кăшманне витме улăм кĕççесем хатĕрлемелле;

б) кăшман турттарма тытăничченех 5 кун малтан кивĕ урапасене юсаса тата çĕнĕрен туса хатĕрлемелле, трактор урапісене, автомашинăсене, çавăн пекех тата кăшман турттарма уйăрнă тракторсене те юсаса çитермелле;

в) 1944 çулхи августăн 10-мĕшĕнчен кая юлмасăр çулсене, кĕперсене, çавăн пекех тата кăшман хатĕрлекен пунктсем патне пымалли çулсене юсаса çитермелле;

г) кăшман турттарма кирлĕ таран туртăм вăйĕ уйăрса çирĕплетмелле, унпала кăшман турттарса пĕтериччен урăх ĕçсенче усă курма памалла мар;

д) сахăр кăшманне тĕрĕс купаласа хурасси çине, ăна сахăр кăшманĕ заводсене турттарса каяччен сыхласа усрамалли чи паха май вырăнне хурса, уйрăмах тимлĕн çаврăнса пăхмалла. Сахăр завочĕсен хатĕрлев пункчĕсене парса пĕтеричченех кăшмана хирти купасенче лайăх сыхласа усрассишĕн ответлăха колхоз председателĕсемпе совхоз директорĕсем çине хурас;

е) сахăр кăшманне сапаласшипе тата вăрласа пĕтерессипе хирĕç кĕрешес шутпа, колхозсенче звеносем тăрăх кун касиччен кăларнă мĕнпур кăшмана виçсе тухса, çирĕп шута илсе пымалла; сахăр кăшманĕ акнă плантацисене талăкĕпех хураллаcа тăмалла тата кăшмана пĕтĕмĕшпех турттарса пĕтеричченех çав вырăнсенче кĕтÿ кĕтмелле мар.

26. Сахăр кăшманне хăвартрах кăларас, çавăн пекех тата ăна пысăк купасене купаласа хурас ĕçе хавхалантарса пырас шутпа, колхозсене çакăн пек тума сĕнес: контрактаци тата натуроплата йĕркипе сахăр кăшманĕ панăшăн колхоза тивекен сахăртан, сахăр кăшманĕ кăларнă тата тасатнă çĕрте ĕçлекен колхозниксене ĕçкунĕсем тăрăх валеççе пама: кăларса тасатнă кăшманăн кашни центнерĕшĕн 40-шер грамм сахăр уйăрмалла, пысăк купасене купаланă кăшманăн кашни центнерĕшĕн 20-шер грамм сахăр уйăрмалла.

Сахăр кăшманĕ кăларнă çĕрте ĕçлекен колхозниксене сахăр парас ĕçе кашни 10 кунрах туса ирттермелле, çавăнпа та сахăр завочĕсен колхозсене завода панă кăшманăн кашни центнерĕшĕн аванс пуçĕпе 60-шар грамм сахăр памалла, çак ĕçе сахăр завочĕ ĕçлеме пуçланăранпа 2—3-мĕш вунăкунлăх иртсен тытăнмалла. Кăшмана пĕтĕмпех парса пĕтернĕ хыççăн, сахăр завочĕсен колхозсемпе татăклă расчет тумалла.

27. Колхозсем кондицие ларман кăшман илсе пырсан, хатĕрлев пункчĕ хупнă тăрăх, çав кăшмана сортлас ĕçе колхозсен вăйĕпе туса ирттермелле, сортлас ĕçе шурнăçа кĕртмесен вара кондицие ларман кăшманшăн сахăр палăртнă нормăн виççĕмĕш пайĕ чухлĕ чакарса памалла.

28. Сахăр завочĕсене тата кăшман хатĕрлекен пунктсене турттарса пынă кăшманăн кашни центнерĕшĕн лавçăсемпе шоферсене, грузчиксене сахăр завочĕсен çакăн чухлĕ сахăр памалла:

	лавçăсене (грампа)	шоферсене (грампа)	грузчиксене (грампа)
6 километр таран турттарсан	10	2	2
6-ран 15 километр таран	25	5	3
15 километртан ытларах турттарсан	40	8	4

Çавăн чухлĕ сахăра лавçăсене вĕсем кăшмана хăйсемех тиессĕ тата хăйсемех пушатассĕ пулсан кăна параççĕ.

Сахăр кăшманне турттарнăшăн тивекен сахăра сахăр завочĕсем лавçăсене тÿрех, вĕсем заводсемпе кăшман хатĕрлекен пунктсене турттарса пынă кăшман хисепне шута илсе, тÿлеççĕ, укçан памалли тÿлеве вара палăртнă тарифăн 50 процентĕ чухлĕ кăна лавçăсене хăйсене тÿлеççĕ.

29. Сахăр кăшманĕ пухса илес ĕçре ĕçлекен колхозниксене шама илнĕ сахăра урăх çĕре расходлама колхозсене чарас.

30. Сахăр кăшманĕ турттарма хăйсен ĕнисене паракан колхозниксене, рабочисемпе служащисене хавхалантарас шутпа, колхозсене контрактаци договорĕсем тăрăх панă сахăрсăр пуçне, колхозниксене, рабочисемпе служащисене кашни тонна-километршăн 100-шер грамм сахăр çирĕплетнĕ льготăллă хакпа сутма сахăр завочĕсене ирĕк парас.

г) Çĕр мамăкне, йĕтĕн-долгунеца тата кантăра пухса кĕртес енĕпе

31. Иртнĕ çулсенче туса илнĕ çĕрмамăк-сырецăн юлашкийĕсене хатĕрлев пункчĕсенчен заводсене турттарса тухас ĕçе 1944 çулхи октябрĕн 1-мĕшĕнчен кая юлмасăр тата йĕтĕн-долгунецăн сÿсне турттарса тухас ĕçе сентябрĕн 5-мĕшĕнчен кая юлмасăр вĕçлемелле.

ССР Союзĕн Пир-авăр Халăх Комиссариатне тата Узбек, Таджик, Туркмен, Казах, Киргиз, Азербайджан тата Армян СС Республикисен Совнаркомĕсене 1944 çулта пухнă çĕрмамăк-сырецă йышăнма кирлĕ çуртйĕре вăхăтра хатĕрлесе çитерме хушас. Кăçалхи çĕрмамăк-сырецă йышăнма тытăниччен çĕрмамăк хумалли складсемпе çуртйĕрсене пурне те пĕтĕмĕшпех юсаса, тасатса тата дезинфекцилесе хатĕрлемелле. Складсем çитмессĕ пулсан, çĕнĕрен вăхăтлăх сарайсемпе уплесем туса лартмалла, çавăн пекех тата тĕрлĕ пушă çуртйĕрсемпе усă курмалла.

32. Çĕрмамăкне пухса илнĕ чухне ăна кашни сорт тăрăх уйрăмăн пухмалла, сортсене хутăштарса яни пулмалла мар, çĕрмамăкĕн сывă хутăççисемпе (коробочкисемпе) чирлĕ хутăççисене хутăштарса ямалла мар, çавăн пекех тата çĕрмамăкне пухса илнĕ, сыхласа усранă тата хиртен хатĕрлев пункчĕсене турттарнă чухне тăккалани пулмалла мар.

33. Çĕрмамăкне шăварса ÿстерекен районсенче кĕрхи çĕртме сухине вăхăтра тăвас шутпа, колхозсемпе совхозсене, хирте усăлса çитмен уйрăм хутăççсем çес юлсан, çĕрмамăкне ноябрĕн 20-мĕшĕнчен суйласа пухса илме тата кайран тасатма сĕнес; ноябрĕн 25-мĕшĕ тĕлне çĕрмамăк-сырецă пĕтĕмпех пухса илме тата декабрĕн 1-мĕшĕ тĕлне уйхирсене çĕрмамăк тунинчен тасатса çитерме сĕнес.

34. Йĕтĕн-долгунеца тата кантăра пухса кĕнĕ çĕрте МТС-сен, совхозсемпе колхозсен йĕтĕн татмалли тата кантăр пухмалли машинисемпе пурнипе те усă курмалла, çавăнпа та кашни МТС-па колхозрах йĕтĕнпе кантăра машинăпа тата алăпа пухса илмелли план туса хумалла, машинăпа пухса илмешкĕн тикĕсрех ÿсекен участоксене суйласа илмелле. Йĕтĕнпе кантăра çапас ĕçе вĕсене пĕтĕмĕшпех пухса пĕтерессине кĕтмесĕрех пуçламалла, йĕтĕнпе кантăра пĕтĕмпех пухса илнĕ хыççăн 10 кунран кая юлмасăр вĕсене çапса пĕтермелле.

35. Пухса илнĕ пĕтĕм йĕтĕн-долгунеца сарса е хутса пултарас ĕçе сентябрĕн 15-мĕшĕнчен кая юлмасăр тата кантăр хутас ĕçе октябрĕн 1-мĕшĕнчен кая юлмасăр вĕçлемелле. Колхозсене, вĕсен йĕтĕне сарса пултармалли лайăх вырăнсем çук пулсан, сивĕ шыва хутса пултарас меслетпе усă курма сĕнес. Вăрлăхлăх акнă вырăнсенчен пухса илнĕ кантăра, шыва хутнипе пĕрлех, улăмне хĕлле сарса пултарас меслетпе те усă курмалла.

36. Пуса татнă çĕрте ĕçлекен колхозниксене пуса татнă чухне тунă ĕçкунĕсем тăрăх валеççе пама татнă пусаран 30 процентне уйăрма колхозсене ирĕк парас. Ĕçкунĕсем тăрăх пуса валеçессине ăна пухса илнĕ хыççăн çийĕнчех туса ирттермелле.

37. СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ 1942 çулхи январĕн 11-мĕшĕнче «1941 çулта акса ÿстернĕ йĕтĕнпе кантăра малтанлăха ĕçлесе тăвас тата хатĕрлес ĕçе хавхалантарасси çинчен» йышăннă 29-мĕш №-лĕ постановленине 1944—1945 çулсем валли те вăйра хăварас; тепĕр майлă каласан, йĕтĕнпе кантăра малтанлăха ĕçлесе тунă тата сортланă çĕрте нормăна тултарса тата ытлашшипех тултарса пыракан колхозниксене, вĕсене ĕçкунĕсем çырса панисĕр пуçне, тĕштырă тата укçа çакăн чухлĕ хушса тÿлеме йĕтĕнпе кантăр акна колхозсене ирĕк парас:

а) ĕçлесе хатĕрленĕ тата государствăна панă йĕтĕнпе кантăр сÿсĕн кашни 10 килограмĕшĕн колхозниксене 2-шер килограмм тĕштырă тата 2-шер тенкĕ укçа памалла;

б) сортласа хатĕрленĕ, типĕтнĕ тата завода леçсе панă, анчах тылламан йĕтĕнпе кантăрăн кашни 100 килограмĕшĕн пĕрер килограмм тĕштырă тата пĕрер тенкĕ укçа памалла;

в) государствăна планран ирттерсе сутнă пĕтĕм йĕтĕнпе кантăр сÿсĕшĕн тата тылламан йĕтĕнпе кантăршăн çав культурăсене малтанлăха ĕçлесе хатĕрленĕ çĕрте пулнă колхозниксене колхоз хушса илнĕ премирен 40 процентне валеçсе памалла.

Çÿлте кăтартнă пек тĕштырă тата укçа парса тÿлессине йĕтĕнпе кантăрăн ĕçлесе хатĕрленĕ продукцине государствăна панă хыççăн çийĕнчех туса ирттермелле.

д) Табакпа махоркăна пухса кĕртес енĕпе

38. Табакпа махоркăна вĕсем техникăна кирлĕ пек пĕтĕмпех писсе çитсен пухса илмелле, вĕсене ытлашши пулса кайма памалла мар, çавăн пекех тата табакăн писсе çитмен çулçисене тата пулса çитмен махоркăна пухса илни те пулмалла мар. Табак промышленноçĕн чĕр тавар ресурсĕсене ÿстерес майпа, табакпа махоркăна хиртех пăхса ÿстернĕ чухне татса илнĕ тăррисене, папкисене типĕтсе усă курмалла, ир акса тăвакан çĕр лаптăкĕсем çинче вара махоркăпа табака иккĕмĕш хут пухса илмелле тăвас пулать.

39. Табакпа махоркăна пухса илес ĕçе çак срокСенче вĕçлемелле тăвас:

а) табака — Казах ССР-ĕнче, Алтай тата Хабаровск крайĕсенче, Сталинград, Воронеж облаçĕсенче — сентябрĕн 20-мĕшĕнчен кая юлмасăр пухса кĕмелле. Узбек, Киргиз, Таджик, Туркмен, Армян, Украина ССР-сенче тата Краснодар крайĕнче — октябрĕн 1-мĕшĕнчен кая юлмасăр; Грузин тата Азербайджан ССР-сенче, Крым тата Дагестан АССР-сенче — октябрĕн 10-мĕшĕнчен кая юлмасăр пухса илмелле;

б) махоркăна Алтай, Красноярск тата Хабаровск крайĕсенче, Омск, Курган, Кемерово, Вологда, Новосибирск, Иркутск, Чита, Свердловск тата Молотов облаçĕсенче, Удмурт тата Бурят-Монгол АССР-сенче — сентябрĕн 1-мĕшĕнчен кая юлмасăр, ытти мĕнпур районсенче вара — сентябрĕн 20-мĕшĕнчен кая юлмасăр пухса илмелле.

40. СССР Çĕрĕç Халăх Комиссариатне махорка акакан районсене табакпа махоркăна сыхса типĕтме шпагат кирлĕ чухлĕ тата вăхăтра илсе пырса, колхозсене пама хушас.

е) Вăрлăхлăх хăварнă курăксене пухса кĕртес енĕпе

41. Курăксен вăрлăхĕ тăкăнса тата тăккаланса пĕтни ан пултăр тесе, вăрлăхлăх хăварнă клевера, люцернăна, тимофеевкăна тата житняка 5 кун хушшинче вырса пуçтармалла, çапса шĕкĕлчессине вара вырма тытăннă хыççăн 20 кун хушшинче туса ирттермелле.

42. Курăксен вăрлăхĕсене çапса шĕкĕлченĕ хыççăн вĕсене çийĕнчех тасатса акма кирлĕ кондицие çитермелле, çапса шĕкĕлченĕ хыççăн вăрлăха тасатмасăр нумай вăхăт тытса усрама юрамасть.

43. Хатĕрлев Халăх Комиссариатне, халиччен пулнă йĕркесем тăрăх, колхозсем государствăна тĕштырă памалли обязательство шучĕпе тата МТС ĕçĕшĕн натуроплата тÿлес йĕркепе государствăна курăк вăрлăхĕ параççĕ пулсан, ăна çакăн пек эквивалентпа йышăнма хушас:

а) клеверăн, люцернăн, житнякăн, тилĕ хÿрин, хĕрлĕ тĕслĕ вĕçкĕн курăкĕн тата çарансемпе выльăх кĕтмелли вырăнсенчи ытти курăксен государствăна сутнă пĕр центнер вăрлăхне тĕштырăн 4 центнерĕшĕн йышăнмалла;

б) тимофеевкăн, америка шуручĕн, улăхри вĕçкĕн курăкĕн государствăна сутнă пĕр центнер вăрлăхне тĕштырăн 3 центнерĕшĕн йышăнмалла;

в) викăн, эспарцетăн, судан курăкĕн, могарăн, африка вирĕн тата сераделлăн государствăна сутнă пĕр центнер вăрлăхне тĕштырăн 2 центерĕшĕн йышăнмалла;

г) улăхри мятликăн, шурă полевицăн, пьед клеверĕн, шурă клеверăн государствăна сутнă пĕр центнер вăрлăхне тĕштырăн 6 центнерĕшĕн йышăнмалла.

Обязательнăй йĕркепе тĕштырă памалли плана тултарнă хыççăн, кивçен илнĕ вăрлăха парса татнă хыççăн, вăрлăх фончĕсем хывнă тата МТС ĕçĕсемшĕн тÿленĕ хыççăн государствăна клевер, люцерна, житняк, тимофеевка, эспарцет тата вика вăрлăхĕсем сутакан колхозсем Заготзерно пункчĕсенче çÿлте асăннă эквивалент тăрăх тĕштырă вăрлăхĕсем илме пултараççĕ. Колхозсене çав тĕштырă вăрлăхне хатĕрлев хакĕпе укçа тÿленĕ хыççăн параççĕ, унсăр пуçне Заготзерно расходĕсене витме кашни центнершăн 2-шар тенкĕ илессĕ.

44. Колхозсемпе совхозсен тĕштыррине тата ытти продукцине çаратса пĕтерни питех те пысăк преступлени пулса тăрать тесе шутласа, СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ колхозсемпе совхозсен тыррине тата ытти ялхуçалăх продукчĕсене вăрлакансене хытă айăплама, 1932 çулхи августăн 7-мĕшĕнче обществăллă социализмлă пурлăха сыхласси çинчен кăларнă закон тăрăх суд тăвасси таранах айăплама суд органĕсене хушса хăварнă.

(Юлашни 3-мĕш страницăра).

1944 çулта тырпул пухса кĕртесси тата ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлесси çинчен

Юлашки. Пуçламăшĕ 1-мĕшпе 2-мĕш страницăра.

II.

Тырпулсене пухса кĕнĕ чухне ĕçе организацилес тата ĕçшĕн тӳлес енĕпе

1. Çакăн пек йĕрке тăвас: колхозсенче тата совхозсен территорийĕнче пурăнакан, ĕçлеме пултаракан мĕнпур çынсем — колхозниксемпе вĕсен çемьисен членĕсем, совхозсенчи рабочисемпе служащисем тата вĕсен çемьисен членĕсем, çавăн пекех тата колхозник мар ытти çынсем те, вĕсем ĕçлеме пултарассĕ пулсан тата промышленноçпа транспортра ĕçлемессĕ пулсан, ӳсе çитнисем те, çавăн пекех 14 çултан иртнĕ подростоксем те, тырпулсене пухса кĕнĕ çĕрте обязательно ĕçлемелле.

1944 çулхи тырпула пухса кĕнĕ вăхăтра мĕнпур ӳсе çитнĕ ĕçлеме пултаракан колхозниксем тата 14 çултан иртнисем пурте, вĕсем ĕçкунĕсен минимумне тултарнипе тултарманнине пăхмасăрах, ĕçе обязательно тухмалла йĕрке тăвас.

2. Тырпул пухса кĕрес ĕçе ачаллă колхозницăсемпе совхозсен ачаллă работницисене активлăн хутшăнтармалла тăвас тата тырпулсене пухса кĕнĕ çĕрте ĕçлекен çынсен ĕç вăхăтне перекетлес шутпа, колхозсен правленийĕсемпе совхозсен директорĕсене тырпулсене пухса кĕрес тапхăр валли ача яслисем, сачĕсем, площадкисем тата ялтан инçетри участоксенче хирти стансем организацилеме хушас.

3. Колхозсене çакăн пек тума хушас: ӳсе çитнĕ, ĕçлеме пултаракан колхозниксем тивĕçлĕ сăлтавсăрах тырпулсене пухса кĕртес ĕçрен пăрăнассĕ пулсан, вĕсем çине, колхоз правленийĕ йышăннă тăрăх, ялхуçалăх артель уставĕн 17-мĕш статьинче кăтартнă пек, штраф хумалла та ĕçкунĕсене чакармалла тата авансла тырă илес правăсăр тăратса хăвармалла.

4. Республикăсен Совнаркомĕсене, крайисполкомсене, облисполкомсене тата райисполкомсене тырпул пухса кĕнĕ вăхăтра ĕçлеме колхозсемпе совхозсене ĕç вăйĕ мĕн чухлĕ хушса памаллине палăртма хушас тата, СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ 1942 çулхи апрелĕн 13-мĕшĕнче «Хулари тата яллă вырăнсенчи ĕçлеме пултаракан халăха колхозсенче, совхозсенче тата МТС-сенче ялхуçалăх ĕçне тума мобилизацилемелли йĕркесем çинчен» йышăннă постановленире кăтартнă пек, тырпулсене пухса кĕнĕ çĕрте ĕçлеме хуласемпе яллă вырăнсенчи ĕçлеме пултаракан çынсене, çавăн пекех тата шкулсемпе вузсенче вĕренекенсене мобилизацилеме хушас.

5. Тырпулсене пухса кĕртнĕ çĕрте ĕçлеме мобилизациленĕ çынсене çакăн пек обязательнăй заданисем памалла: колхозсенче 40—50 ĕçкунĕ чухлĕ тата совхозсенче 50—60 кунхи норма чухлĕ памалла, шкулсенче вĕренекенсем валли колхозсенче 20—30 ĕçкунĕ чухлĕ тата совхозсенче 20—30 кунхи норма чухлĕ памалла; мобилизациленĕ çынсем çав нормăсене тултарнă хыççăн хăйсен ирĕкĕпе мобилизацирен хăтăлма пултарассĕ.

6. Çакăн пек йĕрке тăвас: рабочисемпе служащисен çемьисен ӳсе çитнĕ, ĕçлеме пултаракан членĕсене тата колхозра тăман ытти ĕçлеме пултаракан çынсене, вĕсем колхозра е совхоз территорийĕнче пурăнассĕ пулсан, çавăн пекех тата мобилизаци йĕркипе колхозра тата совхозра ĕçлеме явăçтарнă çынсене, вĕсем тырпулсене пухса кĕрес ĕçрен пăрăннăшăн колхоз правленийĕсемпе совхоз директорĕсем, СССР Совнаркомĕпе ЦК ВКП(б) 1942 çулхи апрелĕн 13-мĕшĕнче «Хулари тата яллă вырăнсенчи ĕçлеме пултаракан халăха колхозсенче, совхозсенче тата МТС-сенче ялхуçалăх ĕçне тума мобилизацилемелли йĕркесем çинчен» йышăннă постановленире кăтартнă тăрăх, уголовнăй йĕркепе ответ тыттарассĕ.

7. СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ 1942 çулхи апрелĕн 13-мĕшĕнче «Хулари тата яллă вырăнсенчи ĕçлеме пултаракан халăха колхозсенче, совхозсенче тата МТС-сенче ялхуçалăх ĕçне тума мобилизацилемелли йĕркесем çинчен» йышăннă постановленин 6-мĕш пунктне улăштарса, çакăн пек йĕрке тăвас: мобилизациленĕ çынсемпе татăклă расчет тăвас вăхăт çитиччен, колхоз правленийĕ вĕсене кашни ĕçлесе тунă ĕçкунĕ пуçне авансла пĕрер килограмм тĕштырă парса пырать; ĕçлекенсемпе калаçса татăлнă тăрăх, пĕр килограмм тĕштырă вырăнне 5 килограмм çĕрулми е ытти ялхуçалăх продукчĕсем парать.

8. Республикăсен Совнаркомĕсене, крайисполкомсемпе облисполкомсене, союзлă республикăсенчи компартисен Центральнăй Комитечĕсене, парти крайкомĕсене, обкомĕсене, горкомĕсене тата райкомĕсене çапла тума хушас: МТС-семпе совхозсенче тырпулсене пухса кĕрес ĕç пынă вăхăт валли промышленноçть предприятисенчи тата учрежденисенчи ĕçлекен комбайнер пулнă çынсене пурне те, механиксем пулса тата слесарьсемчен, сварщиксенчен, тимĕрçĕсенчен, плотниксенчен тăракан рабочисен бригадисене ĕçлеме квалификациллĕ çынсем ямалла; вĕсене комбайнсемпе тракторсене тата тырă вырмалли машинăсене хиртех юсас ĕçре МТС-семпе совхозсене тата колхозсене пулăшма ямалла; анчах çакă вăл предприятие вăрçă заказĕсене пурнăçлама чăрмантармалла мар.

9. СССР Сутуилӳ Халăх Комиссариатне çапла тума хушас: МТС-семпе совхозсенче ĕçлеме мобилизациленĕ инженерсене, механиксене тата квалификациллĕ рабочисене яллă вырăнсенчи промышленноçть рабочийĕсем валли тунă нормăсем тăрăх çăкăр тата ытти продуктсем парса тămалла. Тырпулсене пухса кĕме мобилизациленĕ тапхăрта вĕсен çемьисем пурăннă çĕрте те вĕсене продуктсем илмелли карточкăсем парса тămалла.

10. СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕн 1942 çулхи апрелĕн 13-мĕшĕнче йышăннă постановленийĕ çумне хушса çапла йышăнас: ялхуçалăх ĕçĕсене мобилизациленĕ квалификациллĕ рабочисен вĕсем хăйсем ĕçленĕ вырăнсенче юлашки виçĕ уйăх хушшинче ĕçлесе илнĕ уйăхри вăтам ĕç укçин 50 проценчĕ чухлĕ ĕç укçи сыхланса юлать.

11. Мĕнпур колхозсемпе совхозсенче тырпул пухса кĕртнĕ çĕрте тата государствăн хатĕрлев пункчĕсене ялхуçалăх продукчĕсем турттарнă çĕрте ĕçе уйрăм сдельщина тăрăх тата пысăк мар ушкăнсене (звеносене) уйăрмашкăн ĕç хушса панă тăрăх организацилемелле. Çавна май колхозсене çапла тума сĕнес: бригадăсенче, звеносенче алăпа тырă вырнă, кĕлте çыхнă, кĕлте пуçтарса çĕмеле хывнă тата кĕлте турттарнă çĕрте, пучах пуçтарнă çĕрте уйрăм çынсене е уйрăм ушкăнсене участоксем уйăрса парса ĕçлеттермелле, тĕштырă тасатнă, тырă турттарнă çĕрте тата ытти ĕçсенче вара — уйрăм çынсене тата пысăк мар ушкăнсене вĕсем тума пултарнă чухлĕ виçепе ĕçсем уйăрса парса ĕçлеттермелле.

12. Колхозсен правленийĕсене, совхозсен директорĕсене çапла тума сĕнес: ĕнесемпе ĕçлекен колхозниксем валли, рабочисемпе служащисем валли колхозра е совхозра çав ĕçсем тĕлĕшпех лашапа ĕçлеме тунă нормăсен виçĕ пайĕнчен пĕр пайĕ чухлĕ ĕç норми тумалла, сдельнăй ĕç хакĕ вара пĕр пекех юлать. Колхозсенче тырпул пухса кĕртнĕ çĕрте хăйсен ĕнисемпе ĕçлекен колхозниксене вĕсем тунă ĕçсемшĕн ĕç кунĕсем икĕ хут ӳстерсе памалла, совхозсенче вара тырпул пухса кĕртнĕ çĕрте хăйсен ĕнисемпе ĕçлекен рабочисемпе служащисене çав ĕçсенех лашапа тунăшăн тӳлемелли расценкăран икĕ хут ӳстерсе ĕç укçи тӳлемелле.

Колхозниксемпе рабочисен тата служащисен ĕнисене обществăллă хуçалăхра ĕçленĕ мĕнпур тапхăрта ĕçе хутшăнакан обществăллă ĕнесене тăрантарнă пекех тăрантармалла.

13. Государствăна тырă турттарса панă çĕрте хăйсен ĕнисемпе ĕçлекен колхозниксене, рабочисемпе служащисене çакăн пек йĕркепе тӳлеме колхозсене сĕнес:

а) хăйĕн ĕнипе тырă турттаракан колхознике, рабочипе служащие кашни центнер-километршăн 0,30 ĕçкунĕ памалла;

б) ĕçе хавхалантарас шутпа, колхозниксене аванс шучĕпе пама тата колхозăн хуçалăх нушисене витме уйăрнă 15 процент тĕштырăран кашни центнер-километршăн 135 грамма çити тĕштырă хушса памалла, уйăхри çирĕплетнĕ нормăран иртерсе турттарнă тĕштырăшăн вара тырă икĕ хут ӳстерсе памалла.

Совхозсенче государствăна хăйсен ĕнисемпе тырă турттарса панăшăн рабочисемпе служащисене çав ĕçсенех лашапа тунăшăн тӳлекен хакран икĕ хут ӳстерсе тӳлемелле, çавăн пекех тата, ĕçе хавхалантарас шутпа, хăйсен ĕнисемпе тырă турттаракан колхозниксем валли çак пунктра шунă йĕрке тăрăх тата çав виçепех, тĕштырă хушса памалла.

14. Уборка вăхăтĕнче тата хатĕрлев планне тултариччен колхозниксене аванс шучĕпе пама тата колхозăн хуçалăх нушисене витме тĕштырă, хĕвелçаврăнăш, çĕрулмипе пахча-çимĕçсем çакăн чухлĕ виçесемпе уйăрса пумалла тăвас: государствăн хатĕрлев пункчĕсене тĕрĕссипе панă çав культурăсен хисепĕнчен тĕштырă — 15 процент, рис — 10 процент, хĕвелçаврăнăш — 5 процент, çĕрулмипе пахча-çимĕçсем — 15 процент уйăрмалла.

Колхозниксене аванс шучĕпе пама тата колхозăн хуçалăх нушисене витме продуктсем уйăрса хăвармалли çирĕплетнĕ нормăсене епле тытса пынине çирĕпĕн контроллесе тămалла, çав нормăсене кирек мĕнле ӳстерме пăхнине те чарса лартмалла, айăплисене, çав айăпа тырпула салатса пĕтерни вырăнне хурса, ответ тыттармалла.

15. МТС-сенче йĕтĕн-кантăр пухмалли машинăсемпе, клеверпа люцерна çапмалли тата шĕкĕлчемелли молотилкăсемпе, йĕтĕн-кантăр тылламалли машинăсемпе ĕçлекен машинистсене ĕçшĕн тӳлемелли халиччехи йĕркене улăштарас, вĕсене çав ĕçсенчех вĕсемпе пĕрле ĕçлекен трактористсене тивĕçлĕ нормăсене тултарнăшăн тӳленĕ чухлĕ ĕçкунĕсем памалла тăвас, çулталăк асăннă машинистсене ĕçкунĕсем шутласа памалли тата расчетсем тумалли йĕркене, çавăн пекех тата МТС-сенчи трактористсене укçан тата натурăпа тӳлеме пула гарантиллĕ минимума та çулталăкрехре асăннă машинистсемшĕн пĕр пекех хăварас.

16. Колхозри турттăм вăйĕпе ĕçлекен колхозниксене комбайн вырнă тыссăн юлакан улăма пуçтарса, колхоз картишне турттарса купаласа хунăшăн çав улăмăн кашни пиллĕкмĕш пайне пама колхоз правленийĕсене ирĕк парас. Комбайн выççăн юлакан улăма хăйсен ĕнисемпе турттарса купаланă колхозниксене турттарса купана хывнă улăмăн кашни виççĕмĕш пайне пама ирĕк парас.

17. Совхозсенчи трактористсене тата МТС-сенчи участковăй механиксене комбайнпа тырă вырса пуçтармалли плана лайăх пахалăхпа пурнăçланăшăн натурăпа премии памалли 1943 çулта пулнă йĕркене 1944 çул валли те хăварас. Урăхла каласан, МТС-ăн куçса çӳрекен механикĕсемпе участокри механикĕсем, комбайнпа тырă вырса пуçтармалли плана лайăх пахалăхпа пурнăçланăскерсем, тырă вырса пуçтарнă хыççăн 15 кунрал кая юлмасăр МТС-ран 10 пăт тĕштырă натурăпа премии илессĕ, совхозсемпе селекциллĕ станцисенчи трактористсем вара, ĕçшĕн укçа илнисĕр пуçне, унпа пĕрле ĕçлекен комбайнер валли тунă виçепе натурăллă премии — тĕштырă илессĕ.

18. Вырăнти партипе совет тата çĕрĕç органĕсене мĕнпур колхозсенче тырпул пухса кĕртнĕ çĕрте ĕçе тĕрĕс шута илмелле тума тата тырпул мĕн чухлĕ пухнине бригадăсемпе звеносем тăрăх уйрăмшарăн шута илмелле тума хушас. Тырпула çавăн пек бригадăсемпе звеносем тăрăх уйрăмшарăн шута илни колхозниксене, МТС трактористчĕсене ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне ӳстернĕшĕн ĕçшĕн хушса тӳлеме, совхозсенче вара — рабочисене, СССР Совнаркомĕн 1943 çулхи сентябрĕн 17-мĕшĕнче «Совхозсенче çĕрулмипе пахча-çимĕçсем тата ытти çимĕçсем пухса кĕртсе турттарнăшăн натурăпа тӳлесси çинчен» йышăннă постановленийĕ тăрăх, натурăпа тӳлеме май парать.

19. Тырă пухса кĕртиччен тата государствăна ялхуçалăх продукчĕсем парса пĕтериччен колхозсенчен, совхозсемпе МТС-сенчен, СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ ирĕк памасăр, ĕç вăйĕпе чĕрĕ турттăм вăйне тата транспорт хатĕрĕсене уборкăпа тата государствăна ялхуçалăх продукчĕсем турттарса парассине сыхăнман кирек мĕнле урăх ĕçе те мобилизацилеме чарас.

III.

Ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлес енĕпе

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ Хатĕрлев Халăх Комиссариатне, облисполкомсене, крайисполкомсене, республикăсен Совнаркомĕсене, парти обкомĕсемпе крайкомĕсене, союзлă республикăсенчи компартисен Центральнăй Комитечĕсене, райисполкомсемпе парти райкомĕсене çапла тума хушнă:

1. Уборкăн малтанхи кунĕсенчен пуçласах государствăн хатĕрлев пункчĕсене тĕштырă, техникăллă культурăсем тата ытти тĕрлĕ ялхуçалăх продукчĕсем турттарассине организацилемелле, çав ĕçе тума чĕрĕ турттăм вăйĕпе автомашинăсем кирлĕ таран уйăрса хумалла, хатĕрлев планне кашни колхозпа совхоз пĕтĕмĕшпех тултариччен турттăм вăйне мĕнле те пулин урăх ĕçе куçарма чармалла.

2. Колхозсемпе совхозсем государствăна тĕштырă, рис, хĕвелçаврăнăш тата çу тумалли ытти культурăсем — чи лайăххине пама тивĕçлĕ, çапнă тĕштырра тĕплĕн тасатассине, çавăн пекех тата нӳрĕ е йĕпе тĕштырра вăхăтра типĕтессине организацилемелле. Хатĕрлев пункчĕсенче тата заводсенче тивĕçлĕ стандартран нӳрĕрех çĕрмамăкне йышăнма чарас.

3. Çапла йĕрке тăвас: колхозсемпе совхозсем государствăна паракан тĕштырăн, çу тумалли культурăсен тата çĕрулмин малтанхи ушкăнĕ колхозсемпе совхозсен государствăран илнĕ ссудине витнĕ çĕре, çавăн пекех тата колхозсен обязательнăй йĕркепе памалли, МТС ĕçленĕшĕн памалли иртнĕ çулхи парăмĕсене татнă çĕре каять.

Малашне вара колхозсем паракан тĕштырăсемпе çу тумалли культурăсен тата çĕрулмин кашни ушкăнĕнчен çуррине обязательнăй поставкăсен шутне кĕртмелле, тепĕр çур пайне — МТС ĕçленĕшĕн тӳленĕ шута кĕртмелле.

4. Çапла йĕрке тăвас: колхозсем обязательнăй поставка тăрăх тата МТС ĕçленĕшĕн (авăн çапнисĕр пуçне) натуроплата тӳлес шутпа, тĕштырă, хĕвелçаврăнăш тата ытти культурăсем панă чухне, çавăн пекех тата колхозниксемпе единоличник хуçалăхĕсен обязательнăй поставкине тултарнă чухне алла илнĕ обязательствăсенче тата МТС панă счетсенче кăтартнă пек культурăсем çеç памалла.

Тулă, рис, пăрса-ясмăк, хуратул, вир, ырашпа кукуруза пек культурăсене пурне те алла панă обязательствăсенче тата МТС панă счетсенче кăтартнă чухлĕ парса татмалла. Тырă паракан килĕштернĕ тăрăх ытти йышши тĕштырă культурисем вырăнне кирек мĕнле урăх культурăсем те пама юрать. Çу тумалли культурăсем енĕпе, кăтартса панă эквивалент тăрăх, çу тумалли пĕр йышши культура вырăнне тепĕр йышши культура пама юрать.

5. Хатĕрлев Халăх Комиссариатне колхозсенчи тырпул тухăçне разрядсем тăрăх уйăрни çинчен калакан пĕлтерĕве МТС директорĕсене вăхăтра, анчах уборка пуçланнă хыççăн 15 кунран кая юлмасăр пама, МТС директорĕсене вара — Уполнаркомзагран колхозсенчи тырă тухăçне разрядсем тăрăх уйăрни çинчен калакан пĕлтерĕве илнĕ хыççăн 5 кунлăх срокран кая юлмасăр МТС ĕçленĕшĕн колхозсене счетсем пама, тырă вырнăшăн, комбайнпа тырă вырса пуçтарнăшăн, авăн çапнăшăн, тĕштырă тасатнăшăн тата тырă турттарнăшăн вара çав ĕçсене туса пĕтернĕ хыççăн вунă кунран кая юлмасăр счетсем пама хушас. Колхозсене вăхăтра счетсем парассишĕн тата колхозсем натуроплатăна мĕнле татса пынине контроллесе тăрассишĕн МТС директорĕсем хăйсем ответлă пулса тăни çинчен асăрхаттарас.

6. Облаçсемпе крайсенчи тата республикăсенчи партипе совет организацийĕсене государствăна ялхуçалăх продукчĕсем памалли обязательствăсене колхозсем патне хăвăртрах çитерес ĕçре хатĕрлев органĕсене пулăшма хушас.

7. Хатĕрлев Халăх Комиссариачĕпе Центросоюза тырпул хатĕрлевĕ пуçланиччен Заготзерно кашни пунктĕнче лаша тăратмалли картишсем тата тырă паракансем валли чайнăйсем организацилеме хушас.

8. Колхозсемпе совхозсене государствăна ялхуçалăх продукчĕсем турттарса парас ĕçре пулăшма облисполкомсемпе крайисполкомсене тата республикăсен Совнаркомĕсене çапла тума ирĕк парас:

а) хатĕрлев тапхăрĕнче граждăнла предприятисемпе учрежденисен юсавлă автотранспортне (Союззаготтрансăн, Совхозтрансăн автомашинисемсĕр тата сахăр кăшманĕ, çĕрмамăкĕ, йĕтĕнпе кантăр турттарас тĕлĕшпе ĕçлекен транспортсăр пуçне) 50 процент таран мобилизацилемелле тата оборона предприятийĕсемпе строительствăсен юсавлă транспортне 30 процент таран мобилизацилемелле, мобилизациленĕ кашни автомашинăна государствăн хатĕрлев пункчĕсене ялхуçалăх продукчĕсем турттарас тĕлĕшпе обязательнăй заданисем памалла, çав заданисене кашни тонна çĕклекен автомашинăпа 4000 тонно-километр турттарассине шута илсе тумалла.

Çапла йĕрке тăвас: тырă турттарма мобилизациленĕ автомашинăсем валли предприятисемпе учрежденисем хăйсене панă лимит шутĕнчен горючи парассĕ;

б) лашасем тытакан предприятисемпе учрежденисене государствăна ялхуçалăх продукчĕсем турттарса парас тĕлĕшпе, кашни лашапа 50 тонно-километр турттармалла туса, обязательнăй йĕркепе задани памалла.

9. Хатĕрлев Халăх Комиссариачĕпе СССР Совхозсен Халăх Комиссариатне тырă хатĕрлевĕ пуçланнă тĕле Союззаготтранспа Совхозтрансăн грузовой автомашинисене юсаса ĕçе яма хушас. Союззаготтранспа Совхозтрансăн автомашинисене тырă турттарас ĕçпе çыхăнман ытти ĕçсене яма чарас. Союззаготтранспа Совхозтрансăн инçетри пунктсенчен тырă турттарас ĕçре ĕçлемен автомашинисене пурне те совхозсенчен тырă турттарма ямалла тăвас.

10. Облисполкомсемпе крайисполкомсене, союзлă тата автономиллĕ республикăсен Совнаркомĕсене Хатĕрлев Халăх Комиссариачĕн тата СССР Юханшыв флочĕн Халăх Комиссариачĕн органĕсемпе пĕрле ялхуçалăх продукчĕсене хатĕрлес ĕç пуçланиччен пысăк мар юханшывсем тăрăх тырă турттармалли плана пăхса тухса çирĕплеме тата ăна пурнăçа кĕртме хушас.

11. Республикăсен Совнаркомĕсене, крайисполкомсемпе облисполкомсене, государство планĕ тăрăх, сутма тата пĕрлешӳллĕ апатлантарас ĕçе организацилеме çĕрулмипе пахча-çимĕçсем илекен сутуилӳ организацийĕсене хăйсен транспорчĕпе çĕрулми тата пахча-çимĕçсем турттармашкăн хатĕрлев пункчĕсем çумне çирĕплетме хушас.

12. Хатĕрлев Халăх Комиссариатне, СССР Сутуилӳ Халăх Комиссариатне, СССР Апат-çимĕç промышленность Халăх Комиссариатне, СССР Пир-авăр промышленность Халăх Комиссариатне тата Центросоюза тырпулсем йышăнма тытăниччен элеваторсене, складсене, сушилкăсене, хранилищĕсене, шăналăк-михĕсене, виçесемпе тараçăсене пĕтĕмĕшпех хатĕрлесе çитерме хушас, тырпулпа çĕрулмине, пахча-çимĕçсемпе техникăллă культурăсене талăкĕ-талăкĕпех йышăнмалла тума тата, тырпул паракансемпе вăхăтра расчет тăвас шутпа, хатĕрлев пункчĕсене кирлĕ инвентарьпе тырпул йышăнмалли квитанцисен бланкĕсене çителĕклĕ хушса пама хушас.

13. СССР Совхозсен Халăх Комиссариатне, СССР Апат-çимĕç промышленность Халăх Комиссариатне, СССР Аш-какайпа сĕт-çу промышленность Халăх Комиссариатне тырă усрама юрăхлă складсене пĕтĕмпе 30 миллион пăт вырнаçмалăх, Наркомпищепром енĕпе — 6 миллион пăт вырнаçмалăх, Наркоммясомолпром енĕпе — 2 миллион пăт вырнаçмалăх вăхăтлăха усă курмашкăн Наркомзаг аллине 1944 çулхи августăн 1-мĕшĕ тĕлне пама хушас; кайран çав складсенчен тырра совхозсен транспорчĕпе Заготзерно чугун çулсемпе шывçулĕсем çинчи пункчĕсене турттарса тухмалла. СССР Совхозсен Халăх Комиссариачĕн, СССР Апат-Çимĕç промышленность Халăх Комиссариачĕн тата СССР Аш-какайпа сĕт-çу промышленность Халăх Комиссариачĕн совхозĕсенче Наркомзагăн вăхăтлăха хатĕрлев пункчĕсем организацилемелле, çав пункчĕсене çулте кăтартнă совхозсенчен 38 миллион пăт тĕштырă йышăнмалла. Тырра совхозсенчен турттарса тухиччен, Наркомзаг склачĕсен заведующийĕсем ыйтнă тăрăх, совхозсенче йышăннă государство тыррине типĕтес тата тасатас ĕçсене тума СССР Совхозсен Наркомачĕн, СССР Наркомпищепромĕн, СССР Наркоммясомолпромĕн рабочисемпе механизмсем кирлĕ таран уйăрса памалла.

14. Колхозсемпе совхозсем государствăна тĕштырă тата çу тумалли культурăсем парас ĕçне çăмăллатас шутпа, СССР Хатĕрлев Халăх Комиссариатне чугун çул станцийĕсенче, разъездсемпе пристаньсенче çĕнĕрен хатĕрлев пункчĕсем уçма хушас. Çулйĕр Халăх Комиссариатне тата Юханшыв Флочĕн Халăх Комиссариатне станцисенчи, разъездсенчи тата пристаньсенчи пур пек складсене вĕсенче тĕштырăпа çу тумалли культурăсем йышăнмалли хатĕрлев пункчĕсем организацилесе вăхăтлăха усă курмашкăн Наркомзаг аллине августăн 1-мĕшĕ тĕлне пама хушас.

15. Çулйĕр Халăх Комиссариатне тырă турттарма вагонсем тата тырă турттармалли щитсем хатĕрлесе çитерме хушас, вагонсемпе щитсене пуринчен малтан Украинăри, Çурçĕр Кавказри, Вăтам Азири чугун çулсене памалла.

16. Хатĕрлев Халăх Комиссариатне вăрлăхлăх пахча-çимĕçсем акса тăвас тĕлĕшпе ĕçлекен колхозсем мĕнпур пахча-çимĕç вăрлăхĕсене контрактаци договорĕсем тăрăх хатĕрлев пункчĕсене парассĕ пулсан, ăна обязательнăй йĕркепе пахча-çимĕçсемпе çĕрулми пани вырăнне шутлама хушас, пĕр йышши пахча-çимĕçсен культурисене тепĕр йышши пахча-çимĕçсен вăрлăхĕсемпе улăштарма ирĕк парас.

СССР Хатĕрлев Халăх Комиссариатне вăрлăхлăх пахча-çимĕçсем акса тăвас тĕлĕшпе ĕçлекен колхозсем выльăх валли акнă тымар-çимĕçсемпе ытти тĕрлĕ пахча-çимĕçсен вăрлăхĕсене хатĕрлев пункчĕсене контрактаци договорĕсем тăрăх парассĕ пулсан, ăна обязательнăй йĕркепе çĕрулмипе утă пани вырăнне шутлама хушас.

СССР Хатĕрлев Халăх Комиссариатне СССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕпе пĕрле пахча-çимĕçсене, çĕрулмипе тата утă пахча-çимĕç культурисен вăрлăхĕсемпе тата выльăх валли акакан тымар-çимĕçсен вăрлăхĕсемпе улăштармалли эквивалентсене 10 кунлăх срокра тума хушас.

17. Облисполкомсене, крайисполкомсене, союзлă тата автономиллĕ республикăсен Совнаркомĕсене, парти обкомĕсемпе крайкомĕсене, союзлă республикăсенчи компартисен Центральнăй Комитечĕсене элеваторсемпе пунктсен директорĕсем тата складсен заведующийĕсем пухса ĕçлеме çынсем тупас тĕлĕшпе Наркомзага пулăшма хушас.

IV.

Вăрлăхлăх акнă тырпулсене пухса кĕртес енĕпе

1. СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ советпа парти органĕсене, СССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕпе СССР Совхозсен Халăх Комиссариатне иртнĕ çулхи йăнăшсене тума юрамасси çинчен асăрхаттарассĕ, унчухне вырăнти çĕрĕç, советпа парти органĕсен кăшпĕр руководителĕсем колхозсемпе совхозсенчи вăрлăх хуçалăхĕсене пачах та тимсĕр пăхрĕç, вăрлăх участокĕсене вăхăтра уйăрассине тата çав участоксем çинчи тырпула пухса кĕртессине, çавăн пекех тата вăрлăхлăх тĕштырра сыхласа хăварассине те организацилемерĕç, çавна пула чылай облаçсенчи колхозсемпе совхозсем хăйсем валли тĕштырăпа ытти тĕрлĕ ялхуçалăх культурисен вăрлăхĕсене хатĕрлеймерĕç.

2. Вырăнти совет, парти тата çĕрĕç органĕсене, колхозсемпе совхозсене уборка пуçланиччен 15 кун малтан вăрлăхлăх акнă участоксене вырăна тухса тĕрĕслеме тата çав участоксем çинчи тырпула вăхăтра вырса илсе çапассине организацилеме хушас. Кашни колхозрах хывнă вăрлăха кладовщик аллине уйрăм акт тăрăх памалла, çав актра кашни культурăпа сорт тăрăх мĕнле пахалăхлă тата мĕн чухлĕ вăрлăх хывнине кăтартса памалла.

Колхозсемпе совхозсене, вăрлăх фончĕсем пĕтĕмĕшпех хывиччен, вăрлăх участокĕсенчен пухса илнĕ тырпула, вăрлăх хăварнисĕр пуçне, мĕнле те пулин урăх çĕре расходлама чарас. Вăрлăх участокĕсенчен пухса илнĕ тырпула вырăнсăр салатнăшăн айăплă çынсене тата çав ĕçе тума хĕтĕртекен çынсене уголовнăй йĕркепе ответ тыттармалла.

3. Колхозсенчи вăрлăх участокĕсен лаптăкĕсем кашни уйрăм культура тăрăх çак виçерен иртмелле мар тăвас: уйрăм культура акса хăварнă пĕтĕм çĕр лаптăкĕн кĕрхи тулăпа ыраш тăрăх — 12 процентран, сĕлĕпе урпа тăрăх — 13 процентран, çурхи тулă тăрăх — 15 процентран, хуратул тăрăх — 18 процентран, кукуруза тăрăх — 8 процентран, вир тăрăх—7 процентран, пăрçа-ясмăк культурисем тăрăх — 15 процентран, хĕвелçаврăнăшĕпе ытти çу тумалли культурăсем тăрăх (кăтра йĕтĕнне арахиссăр пуçне) — 5 процентран, кăтра йĕтĕнпе арахис тăрăх — 15 процентран, сояпа клещевина тата рис тăрăх — 10 процентран, çĕрулми тăрăх — 15 процентран иртмелле мар.

Çурхи тулă акмалли çĕр лаптăкне малалла ӳстерсе пырас шутпа, Краснодар, Ставрополь, Алтай, Красноярск, Хабаровск, Приморски крайĕсем тăрăх, Астрахань, Сталинград, Куйбышев, Пенза, Саратов, Чкалов, Тамбов, Ульяновск, Молотов, Свердловск, Челябинск, Кемерово, Курган, Новосибирск, Омск, Чита, Иркутск, Ростов облаçĕсем тăрăх, Тутар, Удмурт, Пушкăрт, Мордва, Кабарда, Çурçĕр Осетин, Дагестан, Бурят-Монгол, Мари АССР-сем тăрăх тата Казах ССР-ĕ тăрăх 1944 çулта тĕрĕссипе акнă çĕр лаптăкĕн хисепĕнчен çурхи тулă вăрлăхĕн участокĕсене 18 процента çити ӳстерме колхозсене ирĕк парас.

4. Çĕрулми лартмалли çĕр лаптăкне малалла ӳстерсе пырас шутпа, Воронеж, Куйбышев облаçĕсем тăрăх, Удмурт АССР-ĕ тăрăх, Казах ССР-ĕнчи Джамбул, Кăнтăр-Казахстан, Акмолинск, Хĕвелтухăç Казахстан, Караганда, Гурьев облаçĕсем тăрăх, Грузин, Армян, Азербайджан тата Киргиз ССР-сем тăрăх 1944 çулта тĕрĕссипе акнă çĕр лаптăкĕн хисепĕнчен çĕрулми вăрлăхĕн участокĕсене 18 процента çити ӳстерме колхозсене ирĕк парас.

Çĕрулми лартса тăвас ĕçе йĕркелесе ярас шутпа, УССР-ти Ворошиловград, Сталино, Одесса, Николаев, Херсон облаçĕсем тăрăх, Астрахань, Ростов, Сталинград облаçĕсем тăрăх, Крым АССР-ĕ тăрăх, Туркмен, Узбек тата Таджик ССР-ĕ тăрăх 1944 çулта тĕрĕссипе лартнă çĕрулмин пĕтĕм лаптăкĕнчен çĕрулми вăрлăх участокĕсене виçине 20 процент таран тăвас.

5. Уйрăм вырăнсенче çутçанталăк инкекĕсене пула вăрлăх участокĕсем çинчен начар тырпул илнĕ, çавăнпа хăйсен вăрлăхĕсем çитеймен колхозсемпе совхозсене, райисполкомсем çирĕплетнĕ тăрăх, тырпул чи тухăçлăрах пулнă вырăнсенчен вăрлăх участокĕсем уйăрса хăварма ирĕк парас.

6. Çапла йĕрке тăвас: вăрлăх фончĕсене пĕтĕмĕшпех хывнă хыççăн, колхозсемпе совхозсенчи вăрлăх участокĕсенчен пухса илнĕ тĕштырă ытлашши юлать пулсан, çав ытлашши тырра колхозсемпе совхозсем государство умĕнчи хăйсен обязательствисене тултарнă çĕре пама шутларассĕ, ун хыççăн вара ытти пуçласа тивĕçтернĕ çĕрте усă курма пултарассĕ.

7. Райземхозсем валли тунă халиччехи льготăсем çумне хушса, райземхозсем Госсортфонда обязательнăй поставкăсенчен тата натуроплатăран иртерсе панă сортлă вăрлăхсен кашни 40 кĕрепенкишĕн Заготзерно райземхоза сывăхри складсенчен апат-çимĕçе каякан тĕштырă 55 кĕрепенке памалла тăвас.

8. Пахча-çимĕç вăрлăхĕсем акса тăвас тĕлĕшпе ĕçлекен колхозсене, нумай çул хушши ӳсекен культурăсене енĕпе вăрлăхлăх акса хăвармалли плана тултариччен е пĕр çул хушши ӳсекен культурăсен (помидор, хăяр тата ыттисен) вăрлăхĕсене париччен, контрактациленĕ çĕр лаптăкĕ çинчи вăрлăхлăх акнă пахча-çимĕçсемпе тата тымар-çимĕçсемпе, вăрлăхсăр пуçне, ытти мĕнле те пулин урăх енĕпе усă курма чарас.

Пахча-çимĕç вăрлăхĕсем акса тăвас тĕлĕшпе ĕçлемен колхозсен, вĕсен акнă пахча-çимĕçсемпе тымарçимĕçсем пур пулсан, 1945 çулта лартмашкăн хăйсем валли пахча-çимĕç вăрлăхĕсем хатĕрлесе хăвармалла, пахча-çимĕçсене пухса кĕртнĕ хыççăнах 1945 çулхи çуркунне кăларса лартма вăрлăхлăх хунав тымарĕсем вăхăтра уйăрса хăвармалла.

* * *

Çак постановление яллă вырăнсенчи партипе комсомол пухăвĕсенче, колхозниксен, совхозсемпе МТС-сенчи рабочисемпе специалистсен тата служащисен пухăвĕсенче сӳтсе-явмалла, тырпулсене пухса кĕртес тата ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлес ĕçсене ăнăçлăн туса иртерес тĕлĕшпе тивĕçлĕ решенисем йышăнса хăвармалла.

Нахимовла училище вĕренӳ çулĕ умĕн

Ленинградра нахимовла училище уçăлать. Унта, вырăс флочĕн чи лайăх йăлисене тытса пырса, Тинĕс-Çар Флочĕпе Хĕрлĕ Çар воинĕсен, Отечественнăй вăрçă партизанĕсен тата нимĕç захватчикĕсем вĕлернĕ совет работникĕсемпе парти работникĕсен ывăлĕсем вĕренмелле. Нахимовла училищĕне вĕренме илме ыйтса заявленисем пама пуçланă та ĕнтĕ.

Тбилисири нахимовла училище те çитес вĕренӳ çулне хатĕрленет. Хальхи вăхăтра унта аслă классенче вĕренекенсен пысăкрах пайĕ канма кайнă. (ТАСС).

Аслă шкулсенчи каникул

Июлĕн 16-мĕшĕнче аслă шкулсенче çуллахи каникул пуçланчĕ. Студентсен чылай пысăк пайĕ каникул вăхăтĕнче аслă шкулсен подсобнăй хуçалăхĕсенче, вутă хатĕрленĕ çĕрте тата ытти çĕрте те ĕçлессĕ. Студентсем нумайĕшĕ аслă шкулсенчех юлассĕ, унта вĕсем лабораторисемпе общежитисене юсанă çĕрте ĕçлессĕ. Занятисем пуçланас умĕн студентсене пĕр уйăха канма ярассĕ.

Пур аслă шкулсенче те занятисем октябрĕн 1-мĕшĕнче пуçланассĕ. (ТАСС).

Кок-сагыз тухăçлăхĕшĕн кĕрешмелли татăклă вăхăт

Кок-сагыз тымарне тата вăрлăхне ытларах пухса илес задачăна икĕ услови татса парать: пĕрри вăл — кок-сагыза вăхăтра, агротехникăллă мероприятисене пурнăçласа акасси, тепри вара—кок-сагыз калчисене лайăх пăхса çитĕнтересси.

Малтанхи задачăна кăçал пирĕн колхозсем ăнăçлăн пурнăçларĕç. Кок-сагыз акакан колхозсен хирĕсенче унăн калчисем, иртнĕ çулсемпе танлаштарсан, лайăхрах шăтса тухрĕç, пĕтнисем питĕ сахал пулчĕç. Первомайски районра кок-сагыз калчисем 102 гектартан 89 гектар лайăх, 9 гектар вăтам çитĕнеççĕ, 4 гектар çинче çеç начартарах ӳсеççĕ. Комсомольски районра кок-сагыз 87 гектар акнă, вĕсенчен 31 гектарĕ лайăх, 49 гектарĕ вăтам, 7 гектарĕ начартарах çитĕнеççĕ. Канаш районĕнчи колхозсем 86 гектар кок-сагыз акнă, вĕсенчен 32 гектарĕ лайăх, 46 гектарĕ вăтам çитĕнеççĕ, 8 гектар çинче çеç начартарах. Çакăн пек тĕслĕхсем ытти районсенчен те илсе кăтартма пулать. Çапла вара пысăк тухăçлă кок-сагыз туса илме пирĕн пур майсем те пур. Халĕ ĕнтĕ кок-сагызăн тухăçлăхĕ пĕтĕмпех хамăртан, ăна пăхнинчен, кок-сагыз туса илес тĕлĕшпе ятарласа тунă звеносен ĕçĕнчен килет.

Пирĕн колхозсем умĕнче халĕ иккĕмĕш задача тăрать. Лайăх, ывăнма пĕлмесĕр ĕçлесен, кăçал пысăк тухăçлă кок-сагыз пухса илме пултаратпăр.

Анчах та уйрăм колхозсенче кок-сагыз калчисене пăхасси çителĕксĕр пырать-ха. Нумай колхозсенче йăран хушшисене иккĕмĕш хут кăпкалатма тытăнман, çумкурăкĕсенчен тасатса тăмаççĕ. Хăшпĕр колхозсем кок-сагыз тĕмĕ тавра тата йăрансене кăпкалатассине пĕр хут та туса пĕтермен.

Шăхасан, Елчĕк, Тăвай тата Чуракăк районĕсенчи колхозсем кок-сагыз плантацийĕсене малтанхи хут кăпкалатас тата çумлас ĕçе 90—95 процент пурнăçланă, уйрăм колхозсем ку ĕçе пĕтĕмпех вĕçленĕ. Канаш районĕнчи колхозсем вара пурĕ те 50—60 процент кăна кăпкалатса çумланă. Кок-сагыз плантацийĕсене пăхас тĕлĕшпе Чкаловски тата Сĕрпӳ районĕсенчи колхозсем уйрăмах юлса пыраççĕ. Чкаловски районра кăпкалатма та, çумлама та тытăнман. Сĕрпӳ районĕнче пурĕ те 9 процент кăна çумланă тата кăпкалатнă. Çак районсем иртнĕ çулхи йăнăшсене кăçал та тăваççĕ. Иртнĕ çул Сĕрпӳ районĕнчи «Красный бригадир», «КИМ» колхозсем кок-сагыз плантацине çумкурăкĕсенчен тасатас тата вĕсене пăхас пирки нимĕн те тумарĕç, çак колхозсенче кок-сагыз калчисем пĕтсе ларас патнех çитнĕччĕ, икĕ çул ӳсекен плантацирен çавна пула пурĕ те гектартан 2—3 центнер кăна кок-сагыз тымарĕ пухса илнĕ.

Тăтăшах çумăр çунă хыççăн, юлашки вăхăтра ăшă кунсем тăраççĕ. Кок-сагыз калчисене ӳсе сарăлма лайăх кунсем пуçланчĕç. Анчах та кок-сагыз акнă вырăнсене кăпкалатман тата çумкурăкĕсенчен тасатман пирки, вĕсем нӳрлĕхпе тата çĕрĕн сĕткенĕпе туллин усă кураймаççĕ, начар ӳсеççĕ, вĕсене çумкурăкĕсем чăрмантараççĕ. Плантацисене халех кăпкалатмасан тата çумкурăкĕсенчен те тасатмасан, кок-сагыз тухăçлăхĕ пĕчĕккĕ пулать, хăшпĕр вырăнсенче пуçĕпех пĕтме те пултарать.

Çавăнпа та халех кок-сагыз плантацийĕсене кăпкалатмалла, çумкурăкĕсенчен тасатмалла. Çумкурăксенчен тасатнă чухне уйрăмах сӳя кок-сагыза, кукша пуç чечекне (одуванчик) тĕплĕн пĕтермелле. Çак çумкурăкĕ кок-сагызшăн ытла та сиенлĕ. Лайăх пăхсан çеç ăна кок-сагызран уйăрса илме пулать. Кукша пуç чечекĕн (одуванчик) çулçисем çӳлелле ӳсеççĕ тата çулçин хĕррипе пăчкă шăлĕ пек йĕпсем пулаççĕ. Кок-сагыз çулçисем çĕр çине лапкипе выртаççĕ тата çулçă хĕррисенче йĕпсем те çук. Унсăрăн пуçне кукша пуç чечек кок-сагызран хăвăртрах ӳсет. Кукша пуç чечекне çумланă чухне кок-сагыз ĕçĕнче тăлăнах ĕçлекен звено членĕсем пулмалла. Çак çумкурăкне лайăх палламан çынсем кок-сагыз калчине çумласа тăкма, е кукша пуç чечекĕ текен çумкурăкне палламасăр хăварма пултараççĕ.

Икĕ çул ӳсекен кок-сагыз плантацийĕсене çемçетсе кăпкалатасси тымарсене пухас умĕн пулса иртет. Кăçал акнă кок-сагыз плантацийĕсене ялан кăпкалатса тăмалла, вĕсем çинчи çумкурăкĕсене тăтăшах тасатмалла. Çумкурăкĕсене тымарĕпех, тĕпрен çăлса кăлармалла, мĕншĕн тесен çĕр ăшне татăлса юлнă тымартан çумкурăксем йышлăнрах тухаççĕ, вара татах çумлама тивет. Плантацисене лаша культиваторĕпе, е алă вĕççĕн пĕчĕк кĕреçесемпе, е тимĕртен тунă вăрăм шăллă кĕреплесемпе кăпкалатмалла. Кăпкалатасса сийĕн-сийĕн туса пымалла. Малтан ăшăкрах, иккĕмĕш хутĕнче тарăнрах, унтан тата тарăнрах илмелле. Юлашкинчен, октябрь уйăхĕнче, 14—16 сантиметр тарăнăш кăпкалатса çемçетмелле. Кăпкалатса çемçетнĕ чухне кок-сагыз калчисене апат парсан питĕ усăллă. Азот, фосфор тата кали тăварне кашни гектара 45 килограмм памалла.

Халĕ икĕ çул ӳсекен кок-сагыз плантацийĕсем çинчен вăрлăх пухас ĕç пырать. Кок-сагыз акнă кашни колхозăнах унăн вăрлăхне пĕр тăкаксăр пухса илме тăрăшмалла.

Н. НИКИТИН,
Растжаучук конторин главнăй агрономĕ.

Пур бригадăсенче те ĕçе лайăх йĕркелемелле

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. (Хамăр корр.). «Малалла» колхоз кăçал улăх утти 65 гектар çинчен [illegible]. Халĕ колхоз [illegible] утă хатĕрлеме [illegible].

3-мĕш бригадăра (бригадир Матвеева юлташ) колхозниксем уйрăмах тăрăшса ĕçлеççĕ. Кашни кунах вĕсем [illegible] утă хатĕрлеççĕ. [illegible]

3-мĕш бригадăн ĕç опычĕ ытти бригадăсен [illegible]

С. ШАДИН.

ВЛКСМ райкомĕсен секретарĕсен курсĕ

ВЛКСМ райкомĕсен горком секретарĕсен политикăллă тата практикăллă пĕлĕвне ӳстерес шутпа ВЛКСМ Чăваш обкомĕ [illegible] курс уçрĕ. Унта 28 çын пухăннă. Курсра вĕсем [illegible] «Совет Союзĕн Отечественнăй вăрçи» [illegible]

[illegible] молодежĕ [illegible] политикăпа-массăллă [illegible] физкультура [illegible] лекцисем [illegible]

Вылькăхсем валли çителĕклĕ апат хатĕрлессишĕн

Пирĕн колхоз [illegible] вылькăхсем валли [illegible] фермăра [illegible] 260 сурăх [illegible] 263 сурăх [illegible]

Колхоза [illegible] 136 [illegible] 150 [illegible] 500 [illegible]

Пирĕн колхоз пурĕ 124 гектар утă [illegible]

Пĕр утă кăна хатĕрлесен çителĕксĕр [illegible]

Вылькăхсем валли апат хатĕрлес [illegible]

вылькăхсем валли ытти апатсем хатĕрлеме кашни бригадăнах уйрăм задани панă.

Ферма çумĕнчи участока пахчаран иртерсе 3 гектар акрăмăр. Унта кăшман, чĕкĕнтĕр лартнă тата урпа, вика акнă. Вĕсене фермăра ĕçлекенсем пăхаççĕ. Фермăсен заведующийĕ П. Плотников юлташ хăйне шанса панă ĕçе аван туса пырать, вылькăхсен сурт-йĕрĕсене юсас ĕçе организацилес тĕлĕшпе те вăл лайăх тĕслĕхсем кăтартать. Ферма ĕçĕсене туна 5 лаша уйăрса панă. Вĕсемпе вите юсанă çĕрте кирлĕ пулакан йывăççене турттараççĕ.

Кăçал вылькăх-чĕрлĕх витисене юсама эпир 420 кубометр вăрман хатĕрлерĕмĕр. Вăл йывăççене пĕтĕмпех турттарса пĕтерейменнине вите юсас ĕçе чăрмантарать. Çак кунсенче вăл йывăççене кӳрсе пĕтеретпĕр. Витесене юсама ятарласа плотниксем уйăрнă, вĕсем ĕçе тытăнчĕç ĕнтĕ. Лаша витине юсама тытăннă, пăру витин тăррине çĕнĕрен витесшĕн.

Вылькăх-чĕрлĕхсем валли çителĕклĕ апат тата сурт-йĕрсем хатĕрлес тесе, ывăнма пĕлмесĕр ĕçлетпĕр.

П. АНДРЕЕВ,
Вăрнар районĕнчи «Победа» колхоз председателĕ.

Германири лару-тăру

Гитлера вĕлерме тапăнни

ЖЕНЕВА, июлĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Гитлер агентстви — Германии информаци бюровĕ официальнăй йĕркепе çакăн пек пĕлтернĕ: паян Гитлера вĕлерме тапăннă, сирпĕнтерекен япаласем пăрахнă.

Пĕлтерӳре каланă тăрăх, Гитлерăн ӳчĕ ыратнипе тата тĕллĕн-тĕллĕн пиçнипе иртсе кайнă, анчах унпа пĕрле пулнă çынсене нумайăшне амантнă. Шмундт генерал-лейтенанта, Брандт полковника тата Гитлер сотрудникне Бергера йывăр амантнă. Тата çаксене амантнă: Иодль генерал-полковника, Кортен генерала, Буле генерала, Воденшац генерала, Хойзингер генерала, Шерф генерала, Хось адмирала, фон—Путткамер адмирала, Боргман подполковника тата 1-мĕш рангри капитана Ассмана.

НЬЮ-ЙОРК, июлĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Юнайтед пресс агентствин Берн хулинчи корреспонденчĕ, çирĕплетекен хыпарсем çитмен-ха, тесе, çапла пĕлтерет: Германии тĕрлĕ пайĕсенче Гитлер партийĕн членĕсемпе яланхи çар чаçĕсем хушшинче тытăçусем пулса иртнĕ. Гитлер партин членĕсене çак ĕçре эсэсовецсем ертсе пынă. Шанчăклă вырăнсенчен илнĕ хыпарсем тăрăх, тесе пĕлтерет корреспондент, Германии чи пысăк хулисенче пуринче те Гитлер партийĕн членĕсен пухăвĕсем пулса иртнĕ. Гитлер организацийĕсен пур членĕсене те Гитлер партине тата Гитлера чăннипе парăнса ĕçлесе тăнине çирĕплетсе пама хушнă. Цюрих хулинчен илнĕ хыпарсем тăрăх, Германии тĕрлĕ пайĕсенче хумханусем пулса иртнĕ. Германирен Базеле килекен поездсем 3—6 сехет кая юлса çитеççĕ, çав поездсемпе халăх питĕ сахал килет.

ЖЕНЕВА, июлĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Паян ирхине ирех Германи радиовĕ фашистсен пуçлăхĕсен — Гитлерăн, Герингăн тата ыттисен чĕнĕвĕсемпе приказĕсене панă. Çав передачăсенчен çакă курăнса тăрать: ĕнер Гитлера вĕлерме тапăнни вăл нимĕç генералĕсемпе офицерĕсен ушкăнĕ йĕркелесе янă аклă заговорăн пĕр ĕçĕ кăна пулса тăрать.

Гитлер радио тăрăх çапла пĕлтернĕ: Германире ятарласа тунă «шалти çар» пулать. Çав çар пуçĕнче обер-палач Гиммлер тăрать. Гитлер правительствине хирĕç пыракан юхăма пĕтерсе лартма Гиммлера питĕ пысăк правасем панă.

Геринг Германи авиацине панă приказра çапла каланă: заговор пуçласа яракансем Германири влаçа хăйсен аллине тытса илесшĕн, вĕсем çарпа халăха хăйсем майлă çавăрма тăрăшаççĕ, çав ĕçе тума хăйсен уйрăм приказĕсемпе чĕнĕвĕсене пичетлесе кăлараççĕ. Геринг хушнă тăрăх, Штумпф генерал-полковника полицин шалти чрезвычайнăй авиацийĕн командующине лартнă, çав авиацин Гиммлерпа уйăн «шалти армине» пулăшса тăмалла. Геринг хăйĕн приказĕнче «заговорщиксене пулăшакан» офицерсемпе салтаксене, вĕсем мĕнле чинра тăнине пăхса тăмасăрах тата заговорщиксене пулăшакан граждан çыннисене те вырăнтах персе пăрахма хушать.

ГИТЛЕРОВЕЦСЕМ БЕК ГЕНЕРАЛА ПЕРСЕ ПĂРАХНĂ

ЖЕНЕВА, июлĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Гитлер агентстви — Германи информаци бюровĕ пĕлтернĕ тăрăх, Бек генерал-полковника персе пăрахнă. Вăл Гитлера хирĕç йĕркеленĕ заговора хутшăннă, тенĕ çак пĕлтерӳре.

АФИ агентстви Германири лару-тăру çинчен

ЛОНДОН, июлĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). АФИ агентстви Стокгольмран панă хыпарсенче çапла пĕлтерет: Гитлерпа унăн хăшпĕр генералĕсене, вăл шутра Иодль генерала, вĕлерме тăнк ĕнер, июлĕн 20-мĕшĕнче, каçхине 5 сехет тĕлĕнче пулнă пулас. Шăп çав вăхăтра Германипе Швеци тата вăрçа хутшăнман ытти çĕршывсем хушшинчи телефон сасартăк ĕçлеме пăрахнă. Çав вăхăтра Гитлер хăйĕн штабĕпе канашланă пуль, теççĕ.

АФИ агентствин обозревателĕ палăртнă тăрăх, «Гитлера вĕлерме тапăнни Германии вăрçăпа шалти ĕçсен кризисĕ вăйланса пынине кăтартать. Çак тапăну умĕн кăна çарти пысăк генералсене вырăнтан кăларнă, вăрçас мар тенĕшĕн судсем пулса иртнĕ, пăлхавсем пулнă, сăмахран, Çурçĕр Норвегири нимĕç морякĕсен пăлхавĕ (вĕсем Осло хулинче юсанă суднăсемпе тинĕсе тухма килĕшмен, суднăсен машинисене пăсса пĕтернĕ). Рундштедта вырăнтан кăларни, уй хыççăн 15 кунтан Рундштедт пекех шутлакан Фалькенгаузен генерала та вырăнтан кăларни — рейхсвер командующийĕ пулнă фон Сект фельдмаршал пек шутлакан генералсене хирĕç хĕсни пулать, тесе ăнланаççĕ. Çав генералсем Германи çак вăрçăра пур пĕрех аяла пулчĕ ĕнтĕ, çавăнпа та вăрçăран тухмали майсем тупас пулать, гитлеризма пĕтерсе тăкасси умĕнче те чарăнса тăмалла мар, тесе шутлаççĕ. Çав генералсем Гитлер майлă тăракан çамрăк генералсемпе хирĕçеççĕ, мĕншĕн тесен çамрăк генералсем вĕçне çитиччен вăрçмалла тесе шутлаççĕ. Халĕ ĕнтĕ Гитлер эсэсовецсен генералĕсем çине çеç, сăмахран каласан, Дитрих пеккисем çине тата Гитлер режимĕ юратакан хăшпĕр профессиональнăй генералсем çине (Роммель пеккисем çине тата кăштах фон Клюге пеккисем çине кăна) шанма пулать.

Хĕвелтухăç Пруссири тата Тури Силезири халăх хăраса ӳкни

СТОКГОЛЬМ, июлĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Шведсен «Афтонтиднинген» хаçачĕ çапла çырать: Хĕвелтухăç Пруссири кăна мар, Тури Силезири халăх та хăраса ӳкнĕ. Халăх банксене тата перекет кассисене хывнă укçисене илсе урăх çĕре тарать. Магазинсем хупăнаççĕ. Гитлер «гаулейтерĕ» Кох тăсте çухалнă. Куинти урамсенче Гитлер партийĕн формине тăхăннă çынсем халĕ çукпа пĕрех.

НИМĔÇСЕМ ГЕРМАНИ ВАЛЮТИНЕ ШАНМИ ПУЛНĂ

ГЕТЕБОРГ, июлĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). «Гетеборгс хандельстиднинг» хаçат çапла пĕлтерет: нимĕçсем хăйсен валютине шанми пулнă. Уйрăмах çак ĕç нимĕçсен Дани чиккинчи облаçĕсенче уççăнах палăрса тăрать. Кунта нимĕçсем Дани укçине тупса илме тăрăшаççĕ, ăна хăйсен укçипе пысăк хак парса илеççĕ. Официальнăй йĕркепе кăтартса панă тăрăх, нимĕçсен пĕр марки датчансен икĕ кронĕ тĕшне тăрать, анчах та нимĕçсем хура биржăра датчансен пĕр кронĕшĕн 5 марка тӳлеççĕ.

АФИНЫ ХУЛИНЧЕ ГЕРМАНИ ОФИЦЕРĔСЕМ ПĔР-ПĔРНЕ ПĂШАЛСЕМПЕ ПЕНĔ

ЛОНДОН, июлĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). «Ньюс кроникл» хаçат çапла пĕлтерет: Афины хулинчи «Гран бретань» ятлă отельте нимĕç штабĕнче нумаях пулмасть канашлу пулса иртнĕ. Çав канашлăва «политикăри пысăк ыйтусене» сӳтсе-явма пухнă. Анчах та канашлу ăнăçлă пĕтмен. Офицерсем пĕр-пĕрне револьверсемпе пеме пуçланă, улттăшне вилмеллех амантнă. Нимĕçсен Пелопоннес çурутравĕ çинчи гражданла администрацийĕн руководителĕ çакăн хыççăн урăх çĕре тарма хăтланнă, анчах та ăна эсэсовецсем персе вĕлернĕ. Афины хулинчи гитлерла полици начальникне Фриче полковника, çав канашлура пулнăскерне, персе пăрахнă. Ăна — «Германии çар руководствине хирĕç тăрса сăмах каланă», тесе айăпланă.

БЕЛЬГИПЕ ÇУРÇĔР ФРАНЦИРЕ ОККУПАЦИЛЛĔ РЕЖИМ ÇИВĔЧЛЕНСЕ ÇИТНИ

ЖЕНЕВА, июлĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Берлинра Гитлер приказне пичетлесе кăларнă. Çав приказра Бельгипе Çурçĕр Францире нимĕçсен гражданла оккупаци администрацине тăвасси çинчен каланă. Çак çĕнĕ администраци гражданла управленин мĕнпур ыйтăвĕсене пăхса тăмалла. Гражданла оккупаци администрацийĕ пуçĕнче Гитлерăн «имперски комиссарĕ» тăрать. Нимĕçсен Бельгипе Çурçĕр Францири оккупациллĕ çарĕсен командующине Фалькенгаузен генерала вырăнтан кăларнă, вăл нимĕçсен Хĕвеланăç Европăри çарĕсен командующийĕ пулнă Рундштедт генерал-фельдмаршалпа çывăх тăнă. Çакăнпа пĕр вăхăтрах Берлинра Гитлерăн Бельгипе Çурçĕр Францири «имперски комиссарĕ» пулма урăх çынна лартни çинчен пĕлтернĕ.

США-ра ДЕМОКРАТСЕН ПАРТИЙĔН СЪЕЗЧĔ УÇĂЛНĂ

ЧИКАГО, июлĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС спецкорĕ). Паян кăнтăрла США-ри демократсен партийĕ уçăлнă. Съездăн малтанхи ларăвĕнче, яланхи пекех, организаци ыйтăвĕсене пăхса тухнă, съездăн тĕрлĕ комитечĕсене суйланă.

ТОДЗИО КАБИНЕЧĔ ВЫРĂНТАН ТУХНИ

ТОКИО, июлĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Домей Цусин агентстви çапла пĕлтерет: июлĕн 18-мĕшĕнче Тодзио кабинечĕ отставкăна тухнă. Японин информаци советчĕ паян ирхине пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă: Тодзио кабинечĕ вырăнтан тухнин сăлтавĕ — «вăрçа вăйлăрах туса пымашкăн» халĕ кабинета çĕнĕ кабинетпа улăштарма кирлĕ пулса тăни пулать, тенĕ.

КĔСКЕН

* Июлĕн 16-мĕшĕнче Неаполь хулине Бразилин экспедициллĕ çарĕсем çитнĕ. Ку çарсем Италире союзниксен ытти çарĕсемпе пĕрле нимĕçсене хирĕç вăрçма пынă.

* Француз халăхне ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен комитет декрет кăларнă. Çав декрет Францин ирĕке кăларнă çĕршывĕнче вырăнти халăх пурнăçне юсаса ярас тĕлĕшпе тивĕçлĕ ĕçсем тумалли çинчен калать.

* США-ра малтан йышăннинчен ирттерсе тата 262 суту-илӳ суднипе танкер тăваççĕ. Вĕсене пурне те 1945 çулхи июлĕн 1-мĕшĕччен туса пĕтерсе хута ямалла.

* Нимĕçсем, хăйсен Югославире тунă юнлă преступленийĕсен йĕрĕсене пытарма хăтланса, халĕ шăтăксенчен 70.000 югославпа 30.000 еврей виллисене чавса кăлараççĕ. Гитлеровецсем вĕсене оккупаци вăхăтĕнче вĕлернĕ. Нумаях пулмасть нимĕçсем Югославин хăшпĕр хулисене çын виллисене çунтармалли кăмакасем янă. Суд вĕлермелле тунă 300 серба çав вилтăприсенчен вилесене чавса кăларса çунтарса яма хушнă. (ТАСС).

Çурçĕр Францири вăрçă ĕçĕсем

Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ пĕлтернисем

ЛОНДОН, июлĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ июлĕн 19-мĕшĕнче каçхине пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă:

«Паян ирхине Кан хулинчен кăнтăртарахри тата хĕвелтухăçнерехри районра пехотăпа танковăй чаçсем хаяррăн çапăçнă. Восель хулипе таччăнах çыпçăнса ларнă ялсем пĕтĕмĕшпех пирĕн алăра. Орн шывĕн хĕвеланăç хĕрринче ларакан Лувиньи ятлă яла тата Орн шывĕн хĕвелтухăç хĕрринче ларакан Флери ятлă яла тăшмантан тасатнă. Тăшман оборонине татнă вырăна аслăлатнă, унта союзниксен çарĕсем Руфреви, Демувиль тата Жибервиль ятлă ялсене тытса илнĕ. Пирĕн чаçсем айккипе иртсе кайнă пунктсенче тăшман хирĕç тăнине пĕтерсе тăкнă. Тăшман хытă хирĕç тăрса çапăçать пулин те, союзниксен çарĕсем çаплах наступлени туса пыраççĕ.

Июлĕн 18-мĕшĕпе 19-мĕшĕнче союзниксен çар карапĕсемпе десант суднисем хĕвелтухăç енчи флангра тăшман батарейисене пенĕ, вĕсем тип çĕр çинчи çарсене пулăшса тăнă. Нормандири базăсемпе усă куракан самолетсем паян ирхине те патрульте çӳренĕ, хамăр çарсене малалла тапăнса пыма пулăшса тăнă.

Кан хули районĕнче ĕнер кун каçиччен 1.250 çынна тыткăна илнĕ. Десант пуçланнăранпа тыткăна илнĕ нимĕçсен хисепĕ халĕ ĕнтĕ 60.000 çынтан та иртет. Союзниксен çарĕсем Отто районĕнче тата Ремийи-сюр-Лозонран çурçĕртерехре тĕллĕн-тĕллĕн малалла кайнă».

* * *

ЛОНДОН, июлĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ июлĕн 20-мĕшĕнче ирхине пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă:

«Кан хулинчен кăнтăртарахра тата хĕвелтухăçнерехре çаплах çапăçусем пыраççĕ. Союзниксен Троарм хули патнелле пыракан çарĕсем çав хуларан çур мильăра чугун çул çине тухнă. Çавăнпа пĕр вăхăтрах ытти чаçсем тăшман çарĕсен Лувиньи ялĕнчи тата Восель хулинчи юлашкийĕсене пĕтерсе тăкасшăн çапăçнă, тăшмана Кормей тата Иф ялĕсенчен хĕссе кăларнă. Çак ялсенчен кăнтăртарахра тата хĕвелтухăçнерехре пирĕн бронетанковăй чаçсем тăшманăн бронетанковăй тата противотанковăй вăйĕсемпе çапăçнă. Кунтан хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем Греньвильпе Сен-Жермен-д'Экто хушшинче пĕр чарăнмасăр малалла каяççĕ.

Союзниксен авиацийĕ тăшман объекчĕсене пыра-пыра тапăннă».

* * *

ЛОНДОН, июлĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ июлĕн 20-мĕшĕнче каçхине пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă:

«Кан хулинчен хĕвелтухăçнерехре тата кăнтăртарахра пехота пыра-пыра çапнипе эпир хамăр алăра тăракан районă кăштах аслăлатнă. Тăшмана Бургебюс тата Френувиль ялĕсенчен хĕссе кăларнă. Çавăн пекех Сен-Андре-сюр-Орнран çурçĕртерехри Бра тата Юбер ятлă ялсем те пирĕн алăра.

Тăшман пирĕн позицисене тапăнма хăтланнисене пирĕн чаçсем сирсе янă. Пирĕн çарсем Сен-Пер патнелле куçса пыраççĕ, вĕсем Троарн хулине тытса илессипе хăратма пуçланă. Сен-Ло хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре союзниксен çарĕсем Вир шывĕ хĕррине тухнă, çавăн пекех тата хăйсен Сен-Ло хулинчен кăнтăртарахри позицисене лайăхлатнă.

Çурçĕртен пуçласа кăнтăрлаччен çанталăк начар тăнă пирки сывлăш-çар вăйĕсем çапăçу хирĕ тĕлĕнче вăйлă кĕрешме пултарайман, анчах та Францин çурçĕр-хĕвелтухăç пайĕнче темиçе ăнăçлă операци туса ирттернĕ».

* * *

ЛОНДОН, июлĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ июлĕн 21-мĕшĕнче ирхине пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă:

«Союзниксен пехоти Сен-Андре-сюр-Орн ялĕнчен çурçĕртерехре выртакан çӳллĕ вырăн енчен тапăнса пынă, Сен-Андре-сюр-Орн ялне тытса илнĕ. Çав ялпа Бургебюс ялĕ хушшинчи плацдарма Орн шывĕнчен пуçласа Верьер хули патне çитиччен аслăлатнă.

Июлĕн 20-мĕшĕнче çанталăк начар тăнă пирки çапăçу районĕ тĕлĕнче союзниксен авиацийĕ вăйлăх кĕрешеймен».

Италири вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, июлĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен штабĕ çапла пĕлтерет: Ливорно хулине илнĕ хыççăн 5-мĕш армири американецсен чаçĕсем 40 километр сарлакĕш фронтра Арно шывĕ патне тухнă. Фронтăн ку участокĕнче Арно шывĕнчен кăнтăралла тăшман йĕркеллĕ хирĕç тăрса çапăçаймасть. Кунтан хĕвелтухăçнелле американецсен 5-мĕш армийĕн чаçĕсем тăшман арьергарчĕсемпе çапăçнă. Вĕсем Чертальдо тата Сан-Донато хулисене тăшмантан тасатнă та Ареццо хулинчен 3 километртан пуçласа 4 километр çурра çитиччен хĕвеланăçнелле куçнă. Акăлчансен 8-мĕш армийĕн чаçĕсем Монтеварки районĕнче тата Радда пункчĕ тавра выртакан çӳллĕ вырăнсенче хаяррăн çапăçнă, Радда ятлă пункта туртса илнĕ. Вара союзниксен çарĕсем Раддаран çурçĕр еннелле куçнă. Фронтăн Адриатика участокĕнче акăлчансен 8-мĕш армийĕн чаçĕсем тăшманпа Эзино шывĕ çинче Анкона хулинчен 12 километрта çапăçаççĕ. Союзниксен çарĕсенчи итальянецсен чаçĕсем Санта-Мариа Нуова хулине туртса илнĕ.

ЛОНДОН, июлĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен штабĕ çапла пĕлтерет: Италире союзниксен çарĕсем çапăлах тăшмана хĕссе пынă. Адриатика секторĕнче 8-мĕш армин чаçĕсем, Эзино шывĕнчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехри сăртлă та куçса çӳреме йывăр вырăнта наступлени туса пырса, чылаях малалла куçнă. Тибр шывĕн тури тăрăхĕн улăхĕнче кĕрешекен 8-мĕш армин чаçĕсем Читта-Ди-Кастелло хули патнелле (Ареццо хулинчен хĕвелтухăçнерехре) çывхарса пыраççĕ. Кунта тăшман чылайранпах хытă хирĕç тăрать. Ареццо хулинчен хĕвеланăçнерехре союзниксен çарĕсем каллех малалла кайнă. 5-мĕш армин участокĕнче союзниксен чаçĕсем Кастель-Фьорентино хули патне (Флоренци хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре) çитнĕ. Ку районра та тăшман малтанхи пекех хытă хирĕç тăрать.

Ĕнер йывăр бомбардировщиксем Кăнтăр Германири чылай объектсене тапăннă. Авиацин ытти соединенийĕсем çапăçусен районĕнчи вăрçă объекчĕсем çине бомба пăрахнă. Истребительсем Югославире çапăçнă.

Югославири çапăçусем

ЮГОСЛАВИ ÇАРĔСЕМ ТЕСЛИЧ ХУЛИНЕ ТУРТСА ИЛНĔ

ЖЕНЕВА, июлĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Югославие ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен халăх армийĕн верховнăй штабĕ çапла пĕлтерет: Боснире Югослави чаçĕсем, наступление вăйлатса пырса, Теслич хулине туртса илнĕ. Тăшманăн 150 салтакĕпе офицерне ытла вĕлерсе пĕтернĕ е амантнă, 350 çынна тыткăна илнĕ. 2 тупă, 10 миномет, 30 станковăй пулемет, 370 винтовка тата ытти çар пурлăхĕ те тытса илнĕ. Петровац хули районĕнче тăшманăн моторизованнăй колоннине аркатса тăкнă. Тăшманăн 150 салтакĕпе офицерне вĕлернĕ: 17 грузовик пĕтерсе тăкнă.

Ликăра Бихач хулипе Клин хули хушшинчи çул районĕнче çаплах хаяр çапăçусем пыраççĕ. Тăшманăн 50 салтакĕпе офицерне яхăн вĕлерсе тăкнă е амантнă. 10 грузовик пĕтерсе тăкнă. Тăшманăн аркатса тăкнă колоннин юлашкийĕсем Бихач хулине тарнă.

Словенири Кутьев хулинче электростанцие пĕтерсе тăкнă. Вăл Словенири заводсене электричество вăйĕ парса тăнă. Çав электростанцишĕн пынă çапçусенче тăшманăн 150 салтакĕпе офицерне вĕлернĕ.

Словенире фронтăн пур участокĕсенче те çапăçусем пыраççĕ. Долина облаçĕн кăнтăр-хĕвелтухăç пайĕнче тăшман наступлени пуçласа янă. Сербире Ястребцы патĕнче пулса иртнĕ хаяр çапăçусем хыççăн Югославие ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен халăх армийĕн чаçĕсем çĕнĕ позицисем çине куçнă.

ЧЕРЧИЛЛЬ МИХАЙЛОВИЧ ÇИНЧЕН КАЛАНИ

ЛОНДОН, июлĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, общинăсен палатинче Англин Михайлович генерал патĕнче пулнă çыхăну офицерĕсене каялла чĕнсе илни çинчен ыйту панă. Çак ыйтăва хирĕç ответлесе, Черчилль çапла каланă:

«Этем вăйĕ çитнĕ чухлĕ эпĕ Югославире пулса пыракан ĕçсене тинкерсех асăрхаса тăратăп. Эпĕ пĕр иккĕленмесĕрех çапла шутлатăп: Михайлович генералпа ĕç тума пăрахма йышăнни пур енчен те тĕрĕс».

Союзниксен авиацийĕн ĕçĕсем

НИМĔÇСЕН ПЕНЕМЮНДРИ ТАТА ЦИННОВИЦĂРИ АВИАБАЗИСЕМ ÇИНЕ БОМБĂСЕМ ПĂРАХНИ

ЛОНДОН, июлĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Американецсен Европăри хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ çапла пĕлтернĕ: паян ирхине «Вĕçекен крепоçсен» пысăк соединенийĕсем (500 самолетран пуçласа 750 самолета çити) нимĕç авиацийĕн Пенемюндри тата Цинновицăри сăнав станцийĕсене (вĕсем Балтика тинĕсĕ хĕрринче, Штеттин хули çывăхĕнче) тапăннă. Çавăн пекех тата Çурçĕр-хĕвеланăç Германири ытти вăрçă объекчĕсем çине те бомбăсем пăрахнă. «Вĕçекен крепоçсене» «Мустанг» тата «Лайтнинг» йышши самолетсем хӳтĕлесе пынă.

Пенемюндра, нумаях пулмасть Черчилль каланă тăрăх, нимĕçсен чи вăйлă сăнав станцийĕ пур, çав станцире «Вĕçекен бомбăсене» сăнаççĕ.

МЮНХЕН РАЙОННЕ ТАПĂННИ

ЛОНДОН, июлĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен штабĕ çумĕнчи Рейтер агентствин корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: июлĕн 19-мĕшĕнче кăнтăрла союзниксен Италири авиацийĕн йывăр бомбардировщикĕсем 250 самолетран пуçласа 500 самолета çитиччен Кăнтăр Германие çĕнĕрен тапăннă. Мюнхен районĕнчи авиаци завочĕсем çине бомбăсем пăрахнă. Илнĕ хыпарсем тăрăх, тапăну ăнăçлă пулса иртнĕ.

АМЕРИКАНЕЦСЕН 1.100 БОМБАРДИРОВЩИКĔ ГЕРМАНИЕ ТАПĂННĂ

ЛОНДОН, июлĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, паян ирхине американецсен 1.100 йывăр бомбардировщикĕ ытла, истребительсен пысăк соединенийĕсем хӳтĕлесе пынипе, Регенсбургри самолетсем пухакан заводсене, Швейнфуртри тата Бамберг патĕнчи шарикоподшипник завочĕсене тата Кăнтăр Германири ытти объектсене те тапăннă.

Г. И. Кикнадзе—Грузин ют çĕршыв ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ

ТБИЛИСИ, июлĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Грузи ССР-ĕн Верховнăй Совет Президиумĕн Указĕ тăрăх, Г. И. Кикнадзене Грузи ССР-ĕн ют çĕршыв ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ пулма лартнă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Шупашкарти эрех комбинатне уполномоченнăйсем тата районсенче сад çимĕçĕсемпе çырласем хатĕрлекен агентсем кирлĕ. Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, ул. Коммунальная Слобода, 21. Телефон 1—73, один звонок.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Шупашкар, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместительпе секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин —0—23.

НТ 00275 Типографи №1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАСС Р. Заказ №2 ф. 6. 59X42 п. л. Тираж 14.400 экз.